Н56
Ч-40502



Зоя Нестерова

# Тӑватӑ асамҫӑ

Национальная библиотека ЧР
4-040502

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

К84 89(=44ч)
Н56

Зоя Нестерова

# Тăватă асамçă

Калавсемпе юмахсем

Художникĕ **И.В. Алексеев**



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2006

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84(2Рос=Чув)6— 44
Н 55

## ТУПМАЛЛИ

Чĕкеç-чĕкеçĕм. *Калав* . . . . . . . . . . . 3
Шуйттан. *Калав* . . . . . . . . . . . . . 11
Янттине хапсăнсан. *Юмах* . . . . . . . . 17
Тăвата асамçă. *Юмах* . . . . . . . . . . 24
Усравкка. *Калав* . . . . . . . . . . . . . 28
Хастар Мăрлуш. *Юмах* . . . . . . . . . 33
Хĕл Мучи килсен. *Калав* . . . . . . . . . 42

Ч-40502
Национальная библиотека Чувашской Республики
ПРОВЕРЕНО 20

ISBN 5-7670-1440-X

© Нестерова З.А., 2006
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2006



## ЧĔКЕÇ-ЧĔКЕÇĔМ

*Калав*

— Эсир халĕ те çывăрмастăр-çке, — илтрĕç балкон çинче тăракан ачасем. — Хĕвел анни хăçан... Халех кĕрсе выртнă пултăр.

— Анне, ăçта пулнă эсĕ? Эпир кĕтетпĕр-кĕтетпĕр сана, — кăмăлсăррăн сăмах хушрĕ çичĕ çулхи Владик. — Кил-ха, пулăш хăвăртрах.

— Мĕн пулчĕ тата? — ыйтрĕ Танюк аппа ывăлĕсем патне тухса.

— Чĕкеç йăвине вĕçсе кĕреймест, — пĕлтерчĕ пиччĕшĕпе юнашар тăракан пилĕк çулхи Миша.

— Мĕнле чĕкеç? Мĕнле йăва?

— Авă епле тапаланать, — кӳршĕсен чӳречи енне аллине тăсса кăтартрĕ Владик.

Чӳрече янахне тул енчен тимĕр листи витнĕ. Вăл пĕр вы-

рӑнта кӑштах ҫӗкленсе тӑрать. Ҫавӑн айне кӗресшӗн тӗрмешет, чӑнах та, чӗкеҫ.

Кашни ҫулах вӗҫсе килеҫҫӗ ҫак хӑвӑрт ҫунатлӑ шавлӑ кайӑксем кунти вырӑнсене, кашни ҫулах кирпӗчрен тунӑ ҫуртсенче хӑйсене меллӗ вырӑн тупса йӑва ҫавӑраҫҫӗ, чӗпсем кӑларса ӳстереҫҫӗ. Питӗ кӑмӑллӑ вӗсем выляса вӗҫнине балконран пӑхса тӑма.

— Чӑвш-ши-и! Чӑвш-ши-и! — хаваслӑн ҫуйхашса умранах вӗлт те вӗлт иртет хура кайӑк ушкӑнӗ. Акӑ вӑл ҫурт ҫинех вирхӗнсе килет. Пӑхатӑн та — чӗре карт! тӑвать — пырса ҫапӑнассӑнах туйӑнать. Ҫук. Стена патне ҫывхарсан кайӑксем ҫӑмӑллӑн вӑр-р ҫавӑрӑнаҫҫӗ те ҫывӑхри ҫуртсем хыҫне кайса курӑнми пулаҫҫӗ, унтан каллех ҫумранах чӑйлатса иртеҫҫӗ. Ҫапла татти-сыпписӗр, пӗр канмасӑр. Мӗн тери илемлӗ, килӗшӳллӗ вӗсен вӗҫевӗ!

Халӗ каҫ пулнӑ, сывлӑшра кайӑк-кӗшӗк курӑнмасть. Пурте йӑвисене ҫывӑрма кайнӑ. Пӗр чӗкеҫ кӑна авӑ канлӗх тупаймасть. Чӳрече янахӗ ҫине ҫирӗплетсе хунӑ шӑвӑҫ айне кӗресшӗн тапӑлтатать. Пӗрре вӗҫсе пычӗ, тепре...

— Йӑви унта пулсан ма кӗреймест вара вӑл? Тимӗрӗ вырӑнтан хускалман пулӗ-ҫке, — мӑкӑртатрӗ ачасен амӑшӗ ҫакна курса. — Тӑхта-ха...

Вӑл йӑпӑр-япӑр пӳлӗме кӗрсе кайрӗ те тепӗр самантран вӑрӑм аврлӑ швабра йӑтса тухрӗ. Пӗр вӗҫӗнчен ҫирӗппӗн тытса мӗнпур пӗвӗпе карлӑк урлӑ кармашрӗ, вара швабрӑна кӳршӗсен чӳречи енне тӑсрӗ. Шӑвӑҫа аялтан ҫаклатса кӑштах ҫӳлелле ҫӗклерӗ. Ҫынсем хӑйне пулӑшма хӑтланнине ӑнланнӑ пекех, кайӑк ҫавӑнтах вӗҫсе пычӗ, пӗр хӑрамасӑр усӑлнӑ шӑтӑка кӗрсе кайрӗ. Пуҫӗ, кӗлетки — шалта, хӳри тата ҫунат вӗҫӗсем — тулта. Тапӑлтатрӗ, тапӑлтатрӗ — малалла каяймарӗ. Вара тухрӗ те тӗттӗмелле вӗҫсе кайса курӑнми пулчӗ.

— Эх, унта чӗпписем тухнӑ пулсан выҫӑ вилеҫҫӗ ӗнтӗ, — хаш сывларӗ Владик.

— Нимӗнле чӗпӗ те ҫук унта, — те пӗлсе, те ывӑлӗсене лӑплантарас тесе каларӗ амӑшӗ. — Йӑва ҫавӑрма вырӑн шырать пулас вӑл. Ан хурланӑр. Тупать. Йӗри-тавра авӑ мӗн чухлӗ ҫурт.

Ирхине, ачисем вăрансан, вăл вĕсене кухньăна чĕнсе илчĕ.

— Килĕр-ха, пĕр япала кăтартатăп, — терĕ вăл ăшшăн кулкаласа. — Анчах ш-ш-ш! ан шавлăр.

Кухньăра чӳрече айĕнчи стенара пысăках мар тăваткал шкап пур. Унта урамалла пĕчĕк шăтăк тухать. Амăшĕ шăппăн утса пычĕ те ачисене çывхарма кăчăк туртса шкап алăкне асăрханса уçрĕ.

— А-ах-х! — тĕлĕннипе сисмесĕрех ахлатса ячĕç ачасем пĕр харăс. Шкапа урлă хăма хурса икĕ пая уйăрнă. Çӳлти хутĕнче пысăк мар хура кайăк лара парать.

— Куртăр-и? — алăк çавăнтах хупăнчĕ.

— Çĕркаçхи чĕкеç! — терĕ çавра питлĕ Владик кăвак куçне хаваслăн йăлкăштарса. — Курчĕ вăл ĕнер эпир ăна пулăшасшăн пулнине. Çавăнпа вĕçсе килнĕ халĕ пирĕн пата йăва çавăрма! Вăт, Миша, халĕ пирĕн хамăрăн чĕкеç пур.

Сăмах ваклама юратман йăпăш питлĕ, хуп-хура куçлă Миша ун çине хăяккăн пăхса илчĕ. Те ĕненмелле ĕнтĕ унăн пиччĕшне. Шухăшласа кăларма ӳркенмест вăл. Хăш-пĕр чух вăйăкулăшăн шăхăртса хăварма та ăста.

— Анне, суймасть-и Владик? Чăнах çĕркаçхи чĕкеç-и вăл? Чăнах йăва çавăрасшăн-и пирĕн патра? — ыйтрĕ ача амăшне куçран тинкерсе пăхса.

— Кам пĕлет ăна. Апла та пулма пултарать, — шухăшлăрах каларĕ амăшĕ. — Малашне курăпăр. Астăвăр, ан шавлăр кунта. Шкап алăкне те ан уçăр. Ăнлантăр-и?

Пĕр кун иртрĕ, иккĕ, виççĕ. Чĕкеç çаплах вĕсен хваттерĕнче пурăнать. Ачасен ăна çав тери курас килет, анчах кайăкĕ хăраса вĕçсе тухса каясран шикленеççĕ вĕсем. Çавăнпа чассчасах хăлхисене пĕчĕк алăк çумне тытса тимлĕн итлеççĕ çеç. Унта кăштăртатни, хуллен чăйăлтатни уççăнах илтĕнет. Тепĕр чух шкапра шăпăрт. Ачасем вара, амăшĕ хушмасть пулин те, алăка уçса пăхаççĕ. Темиçе кун та иртрĕ ĕнтĕ, анчах темшĕнçке чĕкеç йăва çавăрма тытăнни курăнмасть.

— Ну, мĕншĕн пĕччен эсĕ? Мăшăру ăçта? Е чĕпĕ кăларса чăрманас килмест-и? Е пирĕнтен шикленетĕн-и? — шкап алăк-

не уҫса калаҫса илчӗ пӗррехинче ачасен амӑшӗ. — Ан хӑра. Тивместпӗр эпир сана. Кӳрентерместпӗр.

— Аха, тивместпӗр, — хушса хучӗ амӑшӗпе юнашар тӑракан Владик.

— Эпӗ те кӳрентерместӗп, — терӗ Миша та.

Пӗчӗк кайӑк шӑрҫа евӗр ҫап-ҫавра куҫне ҫынсем ҫинчен илмесӗр вӗсен сӑмахне шӑппӑн итлесе ларчӗ.

Тата икӗ-виҫӗ кун иртрӗ. Пӗррехинче ӳкерчӗксем сӑрласа ларакан Владик шыв ӗҫес тесе кухньӑна кӗчӗ те тӑпах чарӑнчӗ. Пӗчӗк алӑк хыҫӗнче хыттӑн кӑштӑртатни, хаваслӑн чӑйӑлтатни илтӗнчӗ. Чӑтаймарӗ ача. Мӗн пулнӑ-ши тесе уҫрӗ алӑка...

— Ур-ра! Иккӗн! Иккӗмӗшӗ те килнӗ! — хаваслӑн кӑшкӑрса чупса тухрӗ вӑл урамра вылякан юлташӗсем патне.

Мишӑпа Владик хваттерӗнче чӗкеҫ пурӑнни, анчах темшӗн йӑва тума васкаманни ҫинчен вӗсен ҫуртӗнче пурӑнакан ачасем пурте пӗлеҫҫӗ. Пӗчӗк шӑтӑкран чӗкеҫ кӗрсе тухнине те час-часах кураҫҫӗ вӗсем.

— Иккӗн лараҫҫӗ, — пит-куҫне хаваслӑн ялкӑштарса каласа пама васкарӗ Владик. — Пӗри, халӗ кӑна вӗҫсе килни ӗнтӗ, мана курсан хӑвӑртрах шӑтӑк енне тапӑлтатрӗ.

— Хӑрать мӗншӗн тесен, — ӑнлантарма тӑчӗ пӗр ачи.

— Паллах. Хӑнӑхман вӑл — мӑн кӑмӑллӑн пӳлчӗ ӑна Владик. — Пӗлмест хальлӗхе эпир вӗсене кӳрентерес ҫуккине. Кӗҫех пирӗн чӗкеҫсем йӑва ҫавӑрса ҫӑмарта тӑваҫҫӗ. Вара пӗчӗк чӗпсем тухаҫҫӗ вӗсен.

— Аха. Пирӗн чӗкеҫсен кӗҫех пӗчӗк чӗпсем пулаҫҫӗ, — пиччӗшӗпе килӗшсе ҫирӗплетрӗ ун сӑмахне Миша. — Анне вӗсене пӗркунах ҫӗтӗк татӑк хурса пачӗ йӑва туччӑр тесе.

— Анне калать, — терӗ Владик, — йӑвине туса ҫирӗплетме вӗсен ҫӑварӗнче уйрӑм сӗлеке пур тет.

Кунсем хӑвӑрт иртрӗҫ.

— Ӗнтӗ пирӗн чӗкеҫсен йӑвара икӗ ҫӑмарта, — савӑнса пӗлтерчӗҫ ачасем халӗ кӑна ӗҫрен таврӑннӑ ашшӗне.

— Авӑ епле, — терӗ лешӗ. — Эппин, ӗненчӗҫ сире. Шанаҫҫӗ эсир вӗсене сиен кӳрес ҫуккине. Юрать. Лайӑх... Ҫапах та тӗлӗнмелле, — хӑйпе хӑй калаҫнӑ евӗр, пуҫне сулкаласа

илчĕ вăл. — Хир кайăкĕ йăви — хваттерте, кухньăра... Кунĕпе ачапча чупать, радио шавлать, апат-çимĕç шăрши...

Вăл малалла иртме тăчĕ, анчах тем аса илнĕн чаранса ывăлĕсем çине пăхса илчĕ.

— Анчах йăнăшатăр эсир, чĕкеçсем мар вĕсем, вĕршĕнсем теççĕ çав кайăксене, — пĕлтерчĕ вăл.

— Вĕршĕнсем? Мĕншĕн вĕршĕнсем? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Владик. — Çу-ук, атте...

— Акă кĕнеке илтĕм паян сире валли, — портфельне уçрĕ ашшĕ, — итлĕр-ха, мĕн çыраççĕ унта... Пăхма пĕрпекрен хăшĕпĕри вĕршĕне чĕкеçпе пăтраштарать, — вуларĕ ашшĕ. — Анчах тишкеререх пăхсан вĕсене çăмăллăнах уйăрма пулать. Вĕçес енчен вĕршĕнрен хăвăрт кайăк çук. Сехетре вăл çĕр хĕрĕхçĕр утмăл çухрăм кайма пултарать. Чĕкеç аллă-утмăл çеç тăвать. Пысăках мар ушкăна пуçтаранса вĕршĕнсем питĕ çуйхашса вĕçеççĕ...

— Э-э... аса илтĕм, аса илтĕм, — васкаса пӳлчĕ ашшĕне Владик. — Тăхта-ха, ан вула, эпĕ калатăп. Тата... чĕкеçĕн хӳри икĕ вĕçлĕ.

— Тĕрĕс. Ну ăнлантăр-и халĕ?

— Мана чĕкеç ытларах килĕшет, — терĕ Миша кăмăлсăр сасăпа. — Анне те ăна чĕкеç тет.

— Ах, пăшатан! Халех хирĕçлеме пăхать, — кулса ячĕ ашшĕ кĕçĕн ывăлĕ çине кăмăллăн пăхса. — Эсĕ, мĕн, илтмерĕн-им кĕнекере çырнине?

Владик илтрĕм, ăнлантăм тенĕн пуçне сĕлтрĕ.

Миша тутине тăсса чĕнмерĕ.

— Мĕншĕн эппин, вĕршĕн пулсан, анне ăна чĕкеç тет? — ыйтрĕ вăл каллех аяккалла пăрăнса утнă ашшĕнчен.

Килте ачасем ытларах амăшне кураççĕ, вăл ĕçрен те иртерех таврăнать, çавăнпа мĕн пĕчĕкрен унпа хутшăнса пĕлменнине унран ыйтаççĕ, вăл ăнлантарнине итлеççĕ.

— Мĕншĕн анне ăна чĕкеç тет?

— Ну... пĕлместĕп, — хулпуççине хускатса илчĕ ашшĕ. — Атьăр, хăйĕнчен ыйтар. Таня, кил-ха кунта, — чĕнсе илчĕ вăл ваннăра кĕпе çăвакан арăмне.

— Мĕншĕн тесен пирĕн енче çав кайăка чĕкеç, тĕрĕсрех каласан, çĕр чĕкеçĕ теççĕ, — пĕлтерчĕ лешĕ йĕпеннĕ аллисене саппунĕпе шăлкаласа. — Вĕршĕн тенине эпĕ пĕрремĕш хут илтетĕп.

— Эппин, чĕкеç те, вĕршĕн те тĕрĕс. Апла та, капла та калама юрать, — килĕшрĕ Владик.

— Эпĕ те ăна çĕр чĕкеçĕ тетĕп, — çирĕплетрĕ хăй шухăшне Миша.

— Хăйĕннех перет, шĕвĕр, — каллех кулса ячĕ ашшĕ.

Виçĕ çăмарта туса виçĕ чĕпĕ çитĕнтерчĕç çав çу хваттерте йăва çавăрнă кайăксем. Çамрăк ăру тĕрекленсе пынă май пĕчĕк шкапра шăплăх çухалчĕ. Халĕ унта яланах кăштăртатни, çунатсем çапкалашни, хуллен чĕвĕлтетни илтĕнет. Эх, çуйăхма тытăнаççĕ тата тепĕр чух — те савăнаççĕ, те тавлашаççĕ. Кам пĕлет вĕсене.

Çурла уйăхĕн çурринче çĕр чĕкеçĕсем вĕçсе кайрĕç. Анчах унтан тăвата-пилĕк кун маларах Мишăна пула пĕчĕк чĕпсем кăшт çеç ашшĕ-амăшĕсĕр юлатчĕç.

Çумăр çукаланă пирки ун чух ачасем килтен тухмарĕç. Владик тимлесех пластилинран самолетсем тăватчĕ. Ăнсăртран хăлхана кайăк çуйхашни пырса кĕчĕ. Ĕçне пăрахса ача кухньăна вирхĕнчĕ. Чупса кĕчĕ те хăранипе тăпах чарăнчĕ. Шкап алăкĕ яр уçă. Чылаях пысăкланнă кайăк чĕппи урайĕнче, чи аякри кĕтесре, лăпчăнса ларать. Ун умĕнче Миша пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа тăрать.

— Мĕн тăватăн эсĕ?! Ма уçрăн алăка?! — кăшкăрса ячĕ пиччĕшĕ.

Пĕчĕк чĕппе тытса йăвине ярас тесе вăл пĕшкĕнчĕ, анчах лешĕ хаяррăн çуйăхса ячĕ те каялла шкап патнелле тапăлтатрĕ.

— Ан хăра, ан хăра, тивместĕп, — ачашшăн мăкăртатса алла илчĕ ăна ача.

Мĕн тери пĕчĕк вăл! Урисем епле çинçешке. Мĕн тери хăрушă пулĕ ăна пысăк çын аллинче! Шĕп-шĕвĕр чĕрнисемпе кайăк чĕппи Владика аллинчен çатăртаттарса тытрĕ. Ыратнине пăхмасăр ача ăна асăрханса йăвине ячĕ. Тепĕр икĕ чĕппи

шкапрах. Кĕтесе кайса лăпчăннă та, куçăм ан куртăр тенĕ пек, пуçĕсене кăкăрĕ çине пĕкнĕ. Владик алăка васкаса хупрĕ.

— Мĕн туса хутăн эсĕ, Миша? Анне каларĕ вĕт çăмартисене те, чĕпписене те тĕкĕнме юрамасть тесе. Ашшĕ-амăшĕ сивĕнсе тухса кайсан? — ÿпкелерĕ вăл шăллĕне.

— Эпĕ курас терĕм çеç. Вăл хăй, алăка кăшт уçрăм кăна, йăкăлт сиксе тухрĕ, — мăкăртатрĕ Миша айăплăн. — Эпĕ тивмен ăна, тĕкĕнмен... Эсĕ ху, ху... — вăл йĕрсе ячĕ.

— Чĕпписене пăрахса кайсан?.. Вилеççĕ вĕт вĕсем...

— Вилмеççĕ. Эпĕ вĕсене хам тăрантаратăп. Хурт-кăпшанкă тытса килетĕп, шыв лартса паратăп, — куççульне шăлса çирĕппĕн татса хучĕ шăллĕ.

— Аха, лартса паратăн, тăрантаратăн, — тăрăхларĕ пиччĕшĕ. — Вĕршĕнсем апата сывлăшра çиеççĕ, шывне те вĕçнĕ чух ĕçеççĕ. Чĕпписене мĕнле тăрантараççĕ вĕсем пĕлетĕн-и? Темĕн чухлĕ хурт-кăпшанкă тытса çăварне тултараççĕ те сĕлекипе ислетсе килсе çитереççĕ.

— Апла мар, суятăн эсĕ. Каллех ху шухăшласа кăларатăн, — çиллессĕн хирĕçлерĕ Миша.

— Суймастăп. Кĕнекере çапла çырнă. Итлеместĕн вуланă чух.

— Ăна чăн-чăн чĕкеçсем çавăн пек тăваççĕ, кусем вĕршĕнсем, — терĕ ним калама аптранă Миша.

— Суятăн! Эпĕ вуланă, пĕлетĕп.

Вĕсем кăшт çеç çапăçса каймарĕç. Юрать-ха амăшĕ килсе кĕчĕ.

Ахалех хумханчĕç ачасем. Çĕр чĕкеçĕсем чĕпписене пăрахмарĕç. Пĕр ирхине вара Миша кухньăна кĕчĕ — шкапра шăпăрт. Уçса пăхрĕ — унта пĕр чун та çук.

— Вĕçсе кайрĕç пирĕн çĕр чĕкеçĕсем кăнтăра, — пĕлтерчĕ Владик юлташĕсене çав кунах. — Таçта хĕл каçаççĕ ĕнтĕ. Те Кăнтăр Африкăра, те Мадагаскар утравĕнче.

Тĕксĕм кĕр килчĕ, ун хыççăн сивĕ хĕл ларчĕ, вара каллех çур кунĕсем çитрĕç.

— Ну, кĕтетĕр-и эсир кăçал та вĕршĕнсене? Манман-и? — ыйтрĕ ашшĕ пĕр çутă ир. — Апла пулсан лайăх йăва туса

парас вӗсене. Атьӑр-ха урама тухар. Тытӑр, кунта пӑтасем, акӑ мӑлатук, хӑма татӑкӗсем.

Меллӗ йӑва пулчӗ. Пӗчӗк ещӗк тӗпне ачасем мамӑк хучӗҫ, вара шкапа тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑртан тасатса ӑна малтанхи вырӑна лартрӗҫ.

Ҫӗр типсе ҫанталӑк ӑшӑтсан ҫутӑ сывлӑшра каллех хӑвӑрт ҫунатлӑ хура кайӑксем курӑнчӗҫ. Ӗнтӗ Владикпа Миша хӑйсен чӗкеҫӗсене чӑтаймасӑр кӗтеҫҫӗ. Кун хыҫҫӑн кун иртет, анчах шкап пушӑ. Урамра вылякан ачасем те пуҫӗсене каҫӑртса чи ҫӳлти хутри чӳрече айӗнче курӑнакан пӗчӗк шӑтӑк ҫине пӑха-пӑха илеҫҫӗ.

Ҫук, курӑнмасть кайӑксем кӗрсе тухни.

— Темле инкек сиксе тухмарӗ пулӗ-ҫке, — терӗ пӗррехинче амӑшӗ те шкап алӑкне уҫса. — Е Миша хӑратнине астуса урӑх килес мар терӗҫ-ши пирӗн кайӑксем? — хушса хучӗ вӑл юнашарах тӑракан ачасем ҫине ӳпкевлӗрех пӑхса.

— Эпӗ тивмен вӗсене. Эп хӑратман. Владик тытрӗ ун чух вӗсен чӗппине, — тутине тӑсрӗ Миша.

— Аха. Каллех ман ҫине йӑвантаратӑн ху айӑпна, — тавлашма тӑчӗ пиччӗшӗ, анчах тем аса илчӗ пулас, шӑпланчӗ те кухньӑран тухрӗ. Кӗҫех вӑл уҫнӑ кӗнеке йӑтса кӗчӗ.

— Анне, эсӗ ан пӑлхан. Итле, акӑ мӗн ҫыраҫҫӗ кунта. «Вӗр-шӗн-сен кӑн-тӑр-тан вӗҫ-се ки-лес вӑ-хӑ-чӗ ви-ҫӗ-тӑ-ва-тӑ эр-не-не я-хӑ-нах тӑ-сӑ-лать», — сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн тӑсса, васкамасӑр вуларӗ ача. — Илтрӗн-и, анне, виҫӗ-тӑватӑ эрнене яхӑнах... Пӗрремӗш ҫӗр чӗкеҫне эпӗ кӑҫал майӑн вуннӑмӗшӗнче куртӑм. Унтанпа виҫӗ эрне иртмен... Иртмен вӗт, анне? — кӗнекине хаваслӑн шарт хупрӗ Владик.

Ӗнтӗ виҫӗ ҫул ҫӗр чӗкеҫӗсем Владикпа Миша хваттерӗнче чӗпсем кӑларса ҫитӗнтерчӗҫ. Ачасем те чылай ӳсрӗҫ ҫак хушӑра... Ҫапах вӗсем кӑҫал та, яланхи пекех, хӑйсен чӗкеҫӗсене килессе кӗтеҫҫӗ. Кӑҫал акӑ ҫурхи шыв шавласа иртӗ, ҫанталӑк ӑшӑтсан вӗсен хваттерӗнче каллех хӑвӑрт ҫунатлӑ хура кайӑк мӑшӑрӗ хаваслӑн ҫуйхашни илтӗнсе кайӗ. Шанаҫҫӗ ачасем ҫапла пуласса, кӗтеҫҫӗ ҫав куна.



# ШУЙТТАН

*Калав*

Ăшăхланса юлнă тип çырма хĕрринче кăвайт ялкăшса çунать. Ун тавра вунă-вун икĕ çула çитнĕ темиçе арçын ача ларать. Кĕçĕр вĕсем кунта Микихвер мучи патне çĕр вырт-маллах килнĕ. Микихвер мучи — колхоз конюхĕ. Кăнтăрла лашасем ĕçре. Тата шăна-пăван хытă аптратать вĕсене, канлĕ çиме памасть. Çавăнпа колхоз лашисене пăхаканĕ кĕтĕве каç-серен симĕс курăклă вырăнсене хуса каять. Ирхине хĕвелпе пĕрле яла хăваласа таврăнать. Çакă илĕртет те арçын ачасе-не. Вĕсен ут утланса чупас килет.

Акă мучи çырмаран хăпарчĕ, вăрăм пушшине пăрахрĕ те кăвайт çывăхне пырса ларчĕ. Ялкăшакан çулăм унăн пĕрке-леннĕ типшĕм питне, шалалла путнă вată куçĕсене çутатрĕ. Микихвер мучи пĕр вăхăт ачасем пупленине чĕнмесĕр итлесе ларчĕ.

— Вăт эсир вĕçĕмсĕр НЛО та НЛО тетĕр, — хутшăнчĕ вăл юлашкинчен калаçăва. — Çапла, нумай çыраççĕ, калаçаççĕ халĕ çав вĕçекен паллă мар япаласем çинчен. Куракансем чылай, анчах вăл пурпĕрех çук... Эпир ӳснĕ вăхăтра та пайтахчĕ çавнашкал тĕлĕнтермĕшсем. Ун чух вĕсене усал-тĕсел тетчĕç. Киремечĕ те пулнă унта, вĕре çĕленĕ те, шуйттанĕ те...

— Эсĕ ху, мучи, курнă-и хăшне те пулин? — ыйтрĕ пĕр ачи.

Ыттисем пĕр харăсах куçĕсене ватă çын çине тĕллерĕç.

— Тĕл пулма лекрĕ ача чух пĕринпе куçа-куçăнах, — терĕ мучи янахне сăтăркаласа. — Шуйттан мĕнне пĕлетĕр-и эсир?

— Э-э, леш... Кам-ха вăл?.. Леш хӳреллĕ, мăйракаллăскер-и? — старик енне пуçне пăрса куларах ыйтрĕ пĕр ачи.

— Аха, шăп çавă. Çынсене усал тума тăрăшать вăл. Ман юмах кĕнекинче пур унăн ӳкерчĕкĕ, — хушса хучĕ тепри.

— Эпĕ ăна хам куçпа виçĕ-тăватă утăмра курнă, — колхоз конюхĕ ачасем çине йăкăлт пăхса илчĕ те ялкăшакан çулăма типĕ турат пăрахрĕ.

— Чăн-чăннипех-и?

— Мĕнле майпа? Хăçан?

— Мĕнлескер вăл? Ӳкерчĕксем çинчи пекех-и? — ыйтрĕ харăсах темиçе сасă.

Мучи çине пĕрисем уççăнах ĕненмесĕр, теприсем иккĕленсе, хăшĕ-пĕри тĕлĕннипе куçĕсене чарсах пăхрĕç.

— Мĕнлескер тетĕр, — тем аса илнĕн васкамасăр сăмахне шутарчĕ ватă çын. — Ну... ӳкерчĕксем çинчи евĕрлех. Анчах хăрушăрах. Çапла, чылай хăрушă.

— Каласа пар-ха, хăçан, мĕнле куртăн?

— Ну, мучи, каласа кăтарт ĕнтĕ. Шутсăр пĕлес килет.

— Хăрамастăр-и çывăрма выртсан тĕттĕмре урараан сĕтĕрсе каясран? — шӳтлерех ыйтрĕ ватă çын. — Кунта — йĕри-тавра пăхăр-ха — шăп усал-тĕсел ашкăнма меллĕ вырăн. Темиçе çырма-çатра, юнашарах вăрман. Çывăхра ял çук. Машина мар, çын та вăр-вар çӳремест.

Хăратпăр текенсем пулмарĕç.

— Юрĕ. Итлĕр эппин, — килĕшрĕ старик кăмăллăн. —

Унччен кайса пăхăр-ха, сирĕн куçăрсем çивĕчрех, лашасем тырă ани çине хăпарман-и?

Лайăх çуллахи каçсенче çапла кăвайт умĕнче тĕрлĕ халапсене итлесе ларма. Таврара шăп. Сайра хутра лаша тулхăрни е пĕр-пĕр ут мăйĕ çине çакнă шăнкăрав хуллен сасă пани çеç илтĕнет. Унтан вăл та аякка кайса çухалать. Умра ялкăш çулăм вылянать: е çăмăллăн сике-сике çӳлелле кармашать, е йăвашланса çĕр çумнелле йăпшăнать. Ун хыçĕнче тĕксĕм кăвак каç хупăрланса тăрать. Вутă çутине пула вăл пушшех тĕттĕмĕн курăнать. Таçта çӳлте çăлтăрсем йăлкăшаççĕ.

— Вунă çулхи ача эпĕ ун чух, анчах çав каçа паянхи пекех астăватăп, — пуçласа ячĕ хăй калавне Микихвер мучи. — Пĕр хĕллехи кун аттепе анне темиçе çухрăмра пурăнакан хурăнташĕсем патне каç выртмаллах кайма хатĕрленчĕç:

— Кĕçĕрех килейместпĕр. Ан кĕтĕр. Хăвăр тĕллĕн çывăрма хăратăр пулсан чĕнĕр кӳршĕсенчен кама та пулин, — терĕ анне Варварие. Варвари — ман аппа, манран икĕ çул аслă.

Ларчĕç те çуна çине вĕçтере пачĕç. Эпир каккуй хăрама! Ирĕке юлнăшăн мĕн пек савăннă ăшшĕ. Аппа çавăнтах хăйĕн çывăх тантăшĕсене улаха чĕнме чупрĕ. Эпĕ те картишĕнчи выльăх-чĕрлĕхе ăшă витене хупрăм та хамăн юлташсене кайса систертĕм. Каччăсемсĕр мĕнле улах пултăр вара!

Каçхи апат çирĕмĕр çеç, пирĕн хăнасем персе те çитрĕç. Икĕ хĕр ача кĕчĕç. Çири тумтирĕсене хывса çакрĕç те кĕнчелеççисене сак çине лартса йĕкисене пĕтĕрме тытăнчĕç. Кăштахран ман юлташсем пырса кĕчĕç. Малтан эпир кулăшла, шӳтлĕ сăмахсемпе перкелешсе лартăмăр, унтан вăййа тытăнтăмăр: таркăн салтакла, çĕрĕлле, куç хупмалла, туртăшмалла. Эх, айкашатпăр, эх, тĕпĕртететпĕр. Пӳрт айăн-çийĕн çаврăнать тейĕн. Унтан ывăнтăмăр. Тытăнтăмăр тĕрлĕ халап яма. Пĕринчен теприн хăрушă.

— Вăт итлĕр-ха. Кунтăк Йăванĕ калать. Чăн пулнă тет ку. Пĕр килте хĕрсемпе каччăсем çапла çĕрле улах ларнă. Сасартăк пӳрт алăкĕ шалт уçăлса кайрĕ тет те пӳрте тем пысăкăш вăрăм хĕрлĕ чĕлхе шăвăнса кĕчĕ тет. Пӳртре ларакансене пĕтĕмпех сăптăрса тухса кайрĕ тет...

Ах, хăрушă. Эпĕ шăнса пасарнă алăк ҫине шикленсе пăхса илетĕп.

— Эпĕ калам-ха тата... Пĕр хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ тăванĕсем патне хăнана кайнă тет. Хĕрĕ пĕччен ларма кичем тесе тантăшĕсене чĕннĕ. Лараҫҫĕ хайхисем кĕнчеле арласа. Ăнсăртран пĕрин йĕки урайне ӳкет те кушак шăтăкĕнчен сакайне чăмать. Хайхи хĕр анать сакайне йĕке патне. Пăхать те — тĕттĕмре икĕ куҫ ялтăр ҫуталчĕҫ тет. Хĕре хирĕҫ вара кĕтесрен темскер, хуп-хураскер, аллисене тăснă, шăвăнса пырать тет.

— Ай-й! — Наҫук йынăшса ячĕ те хăранипе хулпуҫҫисене хĕссе стена ҫумне йăпшăнчĕ.

Варвари кĕнчелине пăрахса йăпăр-япăр сак ҫине хăпарса ларчĕ. Маччаран ҫакса янă краҫҫын лампи темшĕн-ҫке унталла-кунталла сулкаланма пуҫларĕ. Стена ҫинче хура мĕлкесем куҫкалама тытăнчĕҫ. Эпĕ сиксе тăтăм та хăвăртрах пӳрт алăкне ҫаклатса лартрăм.

— Ну, вара, малалла мĕн пулнă? — хистерĕ калакана шурса кайнă Наҫук.

Ҫав самантра пӳрт умĕнче ура сассисем илтĕнчĕҫ.

Шак-шак-шак! уткаласа ҫӳрет тахăшĕ. Чарăнса тăрать, унтан каллех унăн-кунăн куҫкалама тытăнать. Пĕрре алăка та тĕртсе пăхрĕ. Эпир шăпăрт. Хыттăн сывлама та хăратпăр.

— Усал ку. Шуйттан. Илтетĕр-и, епле чĕрнисемпе шаклаттарать, — пăшăлтатрĕ Наҫук. — Пĕтрĕмĕр. Вăл пире пурне те хăй шăтăкне сĕтĕрсе кайса ҫисе ярать, — хĕр ача шăппăн йĕме тытăнчĕ.

Хăранипе сиксех чĕтреттĕм пулин те, таҫтан вăй-хал ҫитертĕм-ҫке, ҫавна халĕ те ăнланмастăп, хам кил хуҫи арҫынĕ пулнине туйса-ши, сиксе тăтăм та пӳрт алăкĕ патне пытăм.

— Кам унта?

Алăк хыҫĕнче шăпăрт пулчĕ. Унтан тенкел ҫине лартнă пушă витресем чăнкăр-чанкăр туса ӳкни илтĕнчĕ.

— Пĕтрĕмĕр... пĕтрĕмĕр — пăшăлтатрĕ каллех Наҫук... саппунĕпе йĕрекен куҫĕсене шăла-шăла. — Ма килтĕм... Ма килтĕм.

— Кĕреймест вăл. Алăка питĕрнĕ вĕт, — лăплантарма тăрăшрĕ хăнасене аппа, анчах хăйĕн те, кĕç-вĕç йĕрсе ярас пек, сасси чĕтрерĕ. Унччен те пулмарĕ, çенĕк алăкĕ шалт уçăлса хупăнчĕ. Такам лап-лап тутарса пӳрт алăкĕ патне утса пычĕ. Алăк карт туртăнчĕ. Пĕрре... иккĕ... виççĕ... Хăранипе ман пыр типсе ларчĕ, куç хуралса килчĕ.

— Варвари! Микихвер! Мĕн питĕрĕнсе ларнă эсир? Е çывăрма выртрăр-и?

Арçын сасси. Палланă пек. Анчах алăка уçма эпĕ вăй-хал çитереймерĕм.

— Ан уç, ан уç, — пăшăлтатрĕ Наçук. — Усал вăл. Пире улталаса кунта кĕресшĕн, юри паллакан çын пек калаçать.

Çапах уçма тиврĕ. Пӳрте кӳршĕ Элекçей пичче кĕрсе тăчĕ.

— Мĕн пулнă сире? Мĕн шăпăртах эсир? — ыйтрĕ вăл пире тĕлĕннĕ куçĕпе пăхса çавăрăнса.

— Çенĕкре такам... Вĕçĕмсĕр алăка уçасшăн туртать. Кам тесе ыйтатпăр, чĕнмест, — пăшăлтатса пĕлтерчĕ Наçук хăранипе чарăлнă куçне кӳршĕ çине тĕллесе.

— Ан калаçăр! Туйăннă сире!

— Чăнах ара! Пурте илтрĕмĕр. Шак-шак утать.

— Халĕ кăна... Эсĕ кĕрес умĕн кăна тенкел çинчи пушă витресене урайне илсе ывăтрĕ.

— Атьăр-ха, пăхар эппин, — терĕ Элекçей пичче. — Вăл маччаран çакса янă краççын лампине вĕçертсе илчĕ те алăк патнелле утрĕ. Эпĕ те унран юлмарăм. Ыттисем — пирĕн хыççăн. Çенĕке кĕшĕлтетсе тухрăмăр. Пăхрăм та — çӳç яшăл вирелле çĕкленчĕ. Тĕксĕм лампа çутинче тĕттĕм кĕтесрен пирĕн çине икĕ куç ялтăр çуталса пăхрĕ. Эпĕ ирĕксĕрех Элекçей пичче çумне йăпшăнтăм. Тăрать хайхи — кĕлетки-çурăмĕ çăмламас, сухалĕ лăстăр-лăстăр силленет, çамки çинче икĕ мăйрака...

— Ме-ха, тыт, — тăсрĕ ман енне Элекçей пичче алăри краççын лампине. Хăй пĕр хăрамасăр тӳрех çав усал еннелле ярса пусрĕ. Тепĕр самантран çутă вырăна сĕтĕрсе те тухрĕ... Качака! Хамăр качаках тăра парать.

Тимлесех итлекен ачасем хаваслăн кулса ячĕç.

— Эпĕ ăна витере тесе, вăл пур, çенĕке кĕрсе юлнă пире хăратма, — вĕçлерĕ мучи хăй калавне.

— Ну, епле-ха. Эсĕ пӳрт умĕнче чăн-чăн шуйттан тăнине куртăм терĕн-çке, — çаплах кула-кула ыйтрĕç ачасем.

— Хăраканăн вунă куç, вуннăшĕ те шиклĕ куç тенĕ. Тем те кăтартĕç вĕсем ирĕке ярсан, — хаваслăн хуравларĕ Микихвер мучи те. Вăл вучаха темиçе хăрăк турат илсе хучĕ. Хĕрӳ çулăм типĕ вутта çавăнтах ыталаса илчĕ те çӳлелле çĕкленсе хаваслăн ташлама пикенчĕ.

— Ну, çывăрăр, — терĕ ачасене лаша кĕтӳçĕ ура çине çĕкленсе. — Эпĕ çавăрăнса килем-ха тепĕр кана... Эй, Хури, ăçталла эсĕ? Каллех тырă ани енне кармашатăн-и? — мучи çырма хĕррипе васкаса утрĕ. Пушă сасси типпĕн шартлатса илчĕ те, кăвак тавралăх каллех шăп пулчĕ.





## ЯНТТИНЕ ХАПСĂНСАН

*Юмах*

Ялкăш ăшă çуркунне сивĕ хĕле хăюллăнах хăвалама тытăнчĕ. Куляннипе, тарăхнипе лешĕн шап-шурă пичĕ кунран-кун хуралса, тĕксĕмленсе пычĕ.

— Ай, хĕвелĕ епле хĕртсе пăхать! Мĕн тери ăшă, лайăх! — хаваслăн чĕвĕлтетрĕ çара йăмра турачĕсем çине пырса ларнă çерçи ушкăнĕ.

— Çитрĕç ăшă кунсем! Кĕтсе илтĕмĕр-илтĕмĕрех.

— Халĕ аптрамастпăр ĕнтĕ. Шăнса кӳтнĕ вăхăт, выçăллă-тутăллă пурнăç иртсе кайрĕ.

— Çапла. Çуркунне çитрĕ. Кĕçех хĕрӳ ĕç пуçланать. Йăва çавăрас пулать, пĕчĕк чĕпсем тухсан вĕсене ăшăтса тăрантарас, пăхса ӳстерес пулать.

— Чăнах та. Иртерех ĕçе тытăннине нимĕн те çитмест. Атьăр, тăванăмсем, каяр.

ч-40502



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ

Шавлă кайăк ушкăнĕ, такам хуса янă пек, пăр-р вĕçсе çĕкленчĕ те çуртсем хыçĕнче курăнми пулчĕ. Анчах пурте мар. Йăмра турачĕ çинче пĕр çамрăк çерçи ларса юлчĕ.

— Чĕк-Чĕрик, эсĕ тата мĕншĕн васкамастăн? — ушкăнран уйрăлса ăна хирĕç пырса ларчĕ тепĕр çерçийĕ. — Эсĕ йăва çавăрас теместĕн-и? Е сана çемье кирлĕ мар-и?

— Ах, Чĕвĕлти, ун пек ан кала-ха. Епле кирлĕ мар. Кирлĕ, пурте кирлĕ: кил-çурт та, çемье те, — терĕ çамрăк çерçи. — Анчах мĕн тума çаплах васкас? Çуркунне тин çеç пуçланать-иç. Пăх-ха эсĕ йĕри-тавралла. Çанталăкĕ кунран-кун ăшăнса, илемленсе пырать. Вĕçĕмсĕр юрлас, ташлас, савăнас килет. Ун вырăнне вара ĕçре пиçĕхсе ирхи куна каç тумалла. Хăвах шухăшла — мĕн чухлĕ ĕç! Малтан йăва çавăрса тертленмелле, каярахпа... Эй, калаçас та килмест манăн халĕ ун çинчен... Паллах, пулать, кил-çурт та пулать, çемье те. Анчах халех мар, каярахпа. Халĕ юрлар, ташлар, савăнар! Çапла мар-и, Чĕвĕлти? — терĕ те Чĕк-Чĕрик çуначĕсем çинчи тĕксене пĕчĕк сăмсипе тӳрлеткелесе илчĕ.

Чĕвĕлти нимĕн те шарламарĕ. Çăмăллăн вĕçсе çĕкленчĕ те пахчари йывăççем хушшине кайса çухалчĕ.

Çапла кун хыççăн кун иртрĕ. Мĕнпур çерçи, ытти кайăк-кĕшĕк пекех, васкарĕ, кунĕ-кунĕпе хĕрӳ ĕçре ирттерчĕ. Пĕрисем кивелнĕ йăвисене тирпейлесе юсарĕç, теприсем çĕнĕрен çавăрчĕç. Чĕк-Чĕрикĕн кăна ĕç çинчен шухăшлас килмерĕ. Вăл турат çинчен турат çине сиккелесех вăхăта ирттерчĕ. Анчах пĕччен юрлама-ташлама та кăмăллах мар çав.

— Çапах çемьесĕр пурăнма юрамасть. Чĕпсене те пăхса ӳстерес пулать, — шухăшласа илчĕ пĕр ирхине Чĕк-Чĕрик. — Эх, кам та пулин йăва туса парасчĕ мана... Шухăшласа тупрăм! — хаваслăн сиккелесе илчĕ вăл, вара çывăхри лупас айне вĕçсе кĕчĕ.

Кунта унăн ашшĕпе амăшĕ пурăнаççĕ. Халĕ вĕсем пикенсех кивĕ йăвине юсаççĕ, çĕнетеççĕ, тасатаççĕ, тирпейлеççĕ.

— Эсĕ-çке ку, — чĕриклетрĕ ватă çерçи ывăлне курсан. — Мĕн ĕççĕр çапкаланса çӳретĕн? Е кил-çурт çавăрма ĕлкĕртĕн те-и? Маттур! Амăшĕ, пăх-ха, пирĕн ывăл йăва туса пĕтернĕ те, —

савӑнса пӗлтерчӗ вӑл ҫӑварне ҫемҫе мамӑк чиксе тултарнӑ мӑшӑрӗ вӗҫсе килсенех.

— Хальлӗхе нимӗнле кил-ҫурт та ҫук-ха манӑн, — сӑмах хушрӗ Чӗк-Чӗрик. — Ҫавӑн пирки калаҫма килтӗм те сирӗн пата... Атте, анне, эсир мана юратса пӑхса ӳстертӗр. Ача чухне маншӑн нимӗн те шеллемерӗр. Эпӗ халӗ те сирӗн ывӑлӑрах. Ҫапла вӗт! Апла пулсан парӑр мана йӑвӑра. Эсир ӗҫлеме хӑнӑхнӑ, хӑвӑра валли ҫӗнӗрен тӑватӑр.

— Эй, ачам, чипертерех калаҫ, — терӗ кӳреннӗ амӑшӗ ҫӑварӗнчи мамӑкне ӳкерсе.

— Мӗн терӗн эсӗ? Тепре кала-ха! — хаяррӑн чӗриклетрӗ ашшӗ ҫамрӑк ҫерҫи ҫине ывтӑнса. Чӗк-Чӗрик лупас айӗнчен вӗлт ҫеҫ сирпӗнсе тухрӗ. Аякри сарай ҫине пырса ларчӗ те кӑмӑлсӑррӑн чӗриклеткелесе йӗри-тавралла пӑхса илчӗ. Курать хайхи — картишӗнче пӗр ача темӗн ӗҫлет: каскалать, якатать, илемлетет. Чӗк-Чӗрик тинкерсе пӑхрӗ те савӑннипе ялт сиксе илчӗ. Ача аллинче пӗчӗк пӳрт. Шӑп ҫерҫие пурӑнмалӑх!

— Эх, маначчӗ ҫак йӑва!

Ача пахчана тухрӗ, пусма лартса йывӑҫ ҫине улӑхрӗ те хайхи пӗчӗк пӳрте ҫав йывӑҫ ҫине ҫирӗплетсе лартрӗ. Анса кӑшт пӑрӑнчӗ кӑна — икӗ шӑнкӑрч вӗҫсе те пычӗҫ. Йышӑнчӗҫ. Малтан пӗри кӗрсе тухрӗ, унтан тепри. Парне килӗшрӗ пулас. Турат ҫине ларчӗҫ те хаваслӑ юрӑ шӑрантарма тытӑнчӗҫ.

— У-у, сӗмсӗрсем! — ҫиллессӗн чӗриклетрӗ ҫерҫи турат ҫинчен турат ҫине сиккелесе. — Ман йӑва вӑл. Эпӗ ӑна сирӗнтен малтан куртӑм. Тухса кайӑр халех!

Анчах шӑнкӑрчсем Чӗк-Чӗрик ҫине ҫаврӑнса та пӑхмарӗҫ. Илемлӗ юррипе пӗр вӑхӑт тавралӑха савӑнтарчӗҫ те ӗҫе тытӑнчӗҫ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри вӗҫе-вӗҫе каять: е улӑм пӗрчи, е тип курӑк, е ҫемҫе ҫӑм татӑкӗ илсе килет. Унтан иккӗшӗ те вӗҫсе кайрӗҫ. Чӗк-Чӗрик нумай шухӑшласа тӑмарӗ, тӳрех шӑнкӑрч йӑвине вирхӗнсе кӗчӗ. «Мӗн тери лайӑх кунта! Тӗттӗм, ӑшӑ. Ҫил вӗрмест, ҫумӑр ҫусан шыв анмасть», — шухӑшларӗ вӑл йӗри-тавра ҫаврӑнкаласа. Вара пуҫне шӑтӑкран кӑларчӗ те хаваслӑн чӗриклетсе унталла-кунталла пӑхкаласа илчӗ. Акӑ

шăнкăрчсем вĕçсе килчĕç. Йăвинче çерçи ларнине курсан çиллессĕн çуйăхма тытăнчĕç. Эх, хирĕлеççĕ! Эх, тулашаççĕ! Çумранах вĕлтлете-вĕлтлете иртеççĕ. Çуначĕсемпе кăшт çеç Чĕк-Чĕрике сĕртĕнмеççĕ.

— Кĕртместĕп! Халĕ кунта эпĕ хуçа! Сирĕлĕр! Кша! Кайса шырăр урăх йăва! — хаяррăн кăшкăрчĕ çерçи пуçне йĕри-тавра паттăррăн çавăркаласа.

Телее, шăнкăрчсем нумай вăхăт тарăхтармарĕç. Сухалчĕç куç умĕнчен.

— Фу! — çăмăллăн сывласа ячĕ Чĕк-Чĕрик. — Капла хăвăрт сирĕлессе шанманччĕ... Çăвар типрĕ ку усалсемпе тавлашса. Чăтма çук ĕçес килет... Чĕвĕлти ăçта-ши? Çавна та систерес пулать. Хăвăртрах килтĕр. Наччас кайса килем-ха.

Анчах йăваран вĕçсе тухрĕ кăна — çывăхри йывăç çинче ларакан шăнкăрч ушкăнĕ тӳрех ун çине ыткăнчĕ. Тытăнчĕç хăвалама. Сехри хăпнă çерçи хăй те сисмерĕ — вăрманах вĕçсе çитрĕ. Вара тин хăпрĕç шăнкăрчсем. Ывăннă Чĕк-Чĕрик йывăç çине канма ларчĕ.

«И-и, кунта та кайăк-кĕшĕк тем чухлех иккен», — шухăшларĕ вăл йĕри-тавралла пăхкаласа. Кунта та ялти пекех, пуртеваскасах ĕçлеççĕ, пĕчĕк йывăç турачĕсене пухаççĕ, тип курăк, çулçă çĕклеççĕ, хурт-кăпшанкă хыççăн хăвалаççĕ... Анчах, çук, пурте мар. Акă йăрăм кăкăрлă пĕр пысăк кайăк ахалех явăнкаласа çӳрет. Пĕр йывăç çине пырса ларать, унтан васкамасăр теприн çине куçать, хĕрӳ ĕçре хыпкаланакан кайăк-кĕшĕке сăнать.

— Эсĕ çерçи вĕт, — терĕ вăл Чĕк-Чĕрик çывăхне пырса ларса. — Мана паллатăн-и? Куккук эпĕ. Мĕн тума килтĕн эсĕ, ял кайăкĕ, вăрмана?

Тинех лăпкăн калаçса ларма кăмăл тунă кайăк тупăнчĕ.

— Пулăшу ыйтма килтĕм, — терĕ çерçи. — Эсĕ пысăк, вăйлă. Мана йăва туса пар-ха...

— Йăва? Хе-хе-хе! — тăрăхласа кулса ячĕ куккук. — Ĕмĕрне те пĕр йăва туса курман. Мĕне кирлĕ вăл мана?

— Епле мĕне кирлĕ? — тĕлĕнчĕ çерçи. — Чĕпсем кăларма. Вĕсене тăрантарса пăхса çитĕнтерме, ăрăва малалла тăсма.

— Ха-ха-ха! — каллех савăнăçлăн кулчĕ йăрăм-йăрăм

кăкăрлă кайăк. — Ман йăх йăвасăрах ăнать. Чĕппĕмсене пăхса ӳстерес тесе йывăр ĕçре пиçместĕп эпĕ. Ӳстерекенсем мансăрах пур.

— Епле апла?

Куккук çерçи çине каллех тăрăхласа пăхса илчĕ.

— Пĕлес килет-и? Çăмарта тăватăп та хуçисем çук чух ăна пĕр-пĕр кайăк йăвине пырса хуратăп. Çавă çеç. Шел, вăрманта пурăнмастăн. Ун чух эсĕ те куккук чĕпписене пăхса ӳстернĕ пулăттăн. Хи-хи-хи! Ха-ха-ха! — ула кăкăрлă кайăк хаваслăн ахăлтатса кулса ячĕ те вăрманалла вĕçсе кĕрсе çухалчĕ.

— Мана кахал теççĕ. Ку кайăк манран та наян иккен, — шухăшларĕ Чĕк-Чĕрик хыçран пăхса юлса. — Анчах кам тимлесех шаккать çав унта?

— Тук-тук-тук! Тук-тук-тук! — ян каять вăрманта уçă сасă. Э-э, улатакка иккен!

— Вăй патăр, улатакка! — терĕ çерçи ун çывăхне пырса ларса, — сана ăста платник теççĕ. Чăнах-и?

Пысăк йывăç вулли çинче ларакан хĕрлĕ тӳпеттейлĕ кайăк Чĕк-Чĕрик çине пăхса илчĕ.

— Калаççĕ пулĕ. Шаккама юрататăп. Сăмсам манăн, куратăн пулĕ, пуртă пекех çирĕп, çивĕч.

— Улатакка, мана йăва туса пар-ха.

— Кирлĕ пулсан, ма туса парас мар, — кăмăллăн килĕшрĕ лешĕ ĕçлеме чарăнмасăр. — Нушаланакансене пулăшас пулать. Кунта нумайăшĕ эпĕ туса панă çурт-йĕрсенче пурăнаççĕ. Акă пулчĕ. Йышăн — ăшă, тирпейлĕ йăва, — терĕ вăл йывăç вулли çинчи чылаях тарăн шăтăк çине кăтартса, — хама валли тесе турăм та, юрĕ, сана пултăр. Ма чĕнместĕн? Е килĕшмест-и?

— Чаплă йăва, тиркеместĕп. Эсĕ чăннипех ăста платник. Анчах ырă кайăк пулса эсĕ мана çавăн пек пӳрт ялта туса пар.

— Мĕншĕн уйрăмах ялта? — тĕлĕнчĕ улатакка шаккама пăрахса. — Кунта та питĕ лайăх-çке. Апат-çимĕç çителĕклĕ. Темĕн чухлĕ хурт-кăпшанкă. Хăвалама ан ӳркен кăна. Пăхха, мĕн чухлĕ кайăк-кĕшĕк пурăнать кунта... Вăрман пире

кил-çурт парать. Эпир ăна сиен кӳрекен тĕрлĕ хурт-кăпшанкăран сыхлатпăр.

— Хурт-кăпшанкă, — терĕ Чĕк-Чĕрик йĕрĕнерех. — Эпир, çерçисем, хурт-кăпшанкăна пĕчĕк чĕпсене çеç çитеретпĕр. Хамăр çын ĕçлесе тунă апат-çимĕçпе тăранса пурăнатпăр. Çавăнпа манăн килĕм-çуртăм та ялта пулмалла.

— Ав епле! — тĕлĕнчĕ улатакка йывăçа çиллессĕн шаклаттарса илсе. — Апла эсĕ пур çĕрте те янттине шыраса çӳренскер. Йăва туса пар сана, апат-çимĕç хатĕрле сан валли... Халех тасалнă пултăр куç умĕнчен! Унсăрăн çирĕп сăмсапа пĕрре шаклаттарса илетĕп çеç... Чăтма пултараймастăп кахалсене!

Хăраса ӳкрĕ Чĕк-Чĕрик. Вăрмантан сирпĕнсе тухрĕ те ялалла вĕçтерчĕ. «Каллех телей пулмарĕ! — шухăшларĕ вăл. — Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ? Вăхăт кĕтмест-çке. Хамăнах тума лекетши вара ку йăвана? Ĕçĕ ытла нумай-çке...»

Çапла шухăшласа Чĕк-Чĕрик çурт çинчен çурт çине, йывăç çинчен йывăç çине вĕçкелесе çӳрерĕ. Пăхать — пӳрт карнисĕ çине мăшăр чĕкеç йăва тума пуçланă. Пĕр канмасăр ĕçлеççĕ. Çывăхри пĕвене вĕлт те вĕлт вĕçе-вĕçе каяççĕ, пылчăк илсе килсе ăна тирпейлĕн вырнаçтарса хураççĕ. «Питĕ лайăх йăва пулать. Çирĕп, шанчăклă. Çумăр йĕпетмест, кушак таврашĕ улăхса сăтăр тăвас çук, ача-пăча та хăпараймĕ, — шухăшларĕ Чĕк-Чĕрик çивĕч çунатлă кайăксем ĕçленине сăнаса. — Юрĕ, туса пĕтерччĕр-ха. Ун чух çак чаплă йăвара кам пурăнассине куç курĕ».

Чĕкеçсем темиçе кун ырми-канми ĕçлерĕç. Акă хайхи йăвана туса пĕтерчĕç. Унтан тĕрлĕ çемçе япала: тĕк, çăм, мамăк йăтма тытăнчĕç.

Чĕк-Чĕрик картишне вĕççе анчĕ. Чăхсем валли сапса панă кĕрпе пĕрчисене васкаса сăхма тытăнчĕ. Çисе тăрансан шыв ĕçрĕ. Ĕнтĕ пĕр-икĕ кун ниçта тухмасăрах ларма пулать... Унтан тӳрех чĕкеç йăвине вирхĕнсе кĕчĕ.

Кӳреннĕ чĕкеçсем шăнкăрчсем пекех çиллессĕн çуйăхаçуйăха йăви умĕпех вĕçе-вĕçе иртрĕç, сĕмсĕр çерçие хуса яма хăтланчĕç.

— Тухмастăп! Тем тесен те тухмастăп. Ку малашне манăн кил! Усăсăр çухăрашатăр, кайăр кунтан! — хаяррăн чĕриклетрĕ сĕмсĕр кайăк.

— Ну, юрĕ, кахал çерçи! — терĕ юлашкинчен чĕкеçсенчен пĕри. Вĕрентетпĕр-ха сана, усал хураха, эпир тăрăшса тунă йăвана епле туртса илмеллине. Ӳкĕнĕн те — кая пулĕ!

— Хăрамастăп! Никамран та хăрамастăп! Хам килте хам хуçа, — çаплах чăрсăррăн кăшкăрчĕ Чĕк-Чĕрик.

Хăвăрт çунатлă çивĕч кайăксем вăртах пăрăнчĕç те куçран пачах çухалчĕç.

«Чĕвĕлти хăвăртрах килтĕрччĕ... Иккĕн пулсан никам та килсе кĕреймест», — шухăшларĕ çерçи йĕри-тавра пăхкаласа.

Вăхăт нумай та иртмерĕ — чĕкеçсем каллех вĕçсе килчĕç. Хальхинче иккĕн мар, ушкăнĕпех. Пĕрин хыççăн тепри йăва патне вĕçе-вĕçе пыраççĕ, кашнин çăварĕнче — пылчăк, кашни ăна шăтăк хĕррине хура-хура хăварать. Çапла Чĕк-Чĕрик умĕнчен вĕçĕ-хĕррисĕр чĕкеç вĕçе-вĕçе иртет. Пăхать çерçи — шăтăк пĕчĕкленсех пырать. Халĕ ĕнтĕ тухас тесен те майĕ çук. Хăраса ӳкрĕ Чĕк-Чĕрик — кăшкăрма, тапăлтатма тытăнчĕ.

— Ай, мĕн тăватăр çак эсир? Чарăнăр! Кăларăр мана! Халех кăларнă пулăр. Тек эпĕ ун пек тумастăп. Хурах! Пулăшăр!

Анчах чĕкеçсем илтмеççĕ тейĕн. Çаплах вĕçе-вĕçе пыраççĕ. Акă ĕнтĕ пĕчĕк шăтăк çеç юлчĕ, унтан вăл та питĕрĕнчĕ. Вара чĕкеç ушкăнĕ вăшт çаврăнчĕ те инçете кайса курăнми пулчĕ.

Кахал çерçи пурнăçĕ çакăнпа вĕçленетчĕ пулĕ. Юрать-ха, мĕн пулни-иртнине хайхи ача сăнаса тăнă. Вăл вăрăм пусма илчĕ те ăна пӳрт çумне лартса чĕкеç йăви патне улăхрĕ. Кĕрсе тухмалли шăтăка уçрĕ.

Чĕк-Чĕрик нумай кĕттермерĕ — ют йăваран пăшалтан пенĕ пек сирпĕнсе тухрĕ.

— Э-э-э, хăрарăн-и? — кулкаларĕ ача ун хыççăн пăхса юлса. — Лайăх вĕрентрĕç сана, кахала. Тек ют йăвана ан хапсăн. Ĕçле, ху ту.



# ТӐВАТӐ АСАМҪӐ

*Юмах*

Ҫулталӑкри тӑватӑ вӑхӑт — Ҫуркунне, Ҫу, Кӗркунне, Хӗл — темле майпа-ҫке пӗрле пуҫтарӑннӑ тет. Ӗҫӗ-хӗлӗ пирки сӑмах-юмах хускатсан вӗсенчен пӗри ҫапла каланӑ:

— Эпир тӑватӑ тӑван, пурсӑмӑр та асамлӑ ӑстаҫӑсем. Анчах пирӗнтен хӑшӗ ҫут ҫанталӑка пахарах капӑрлатма пултарать-ши?

— Атьӑр ӑмӑртса пӑхар, — кӑштах шухӑшланӑ хыҫҫӑн сӑмах хушнӑ тепри.

— Пирӗн пултарулӑха тӗрӗс хак пама ҫынсене — ӳнерҫӗсене, сӑвӑҫсене — чӗнӗпӗр. Вӗсем таврари илеме уйрӑмах ҫивӗч, сисӗмлӗ туяҫҫӗ.

Сӗнӳ пурне те килӗшнӗ.

— Кам тухас тет чи малтан хӑйӗн ӑсталӑхне кӑтартма?

— Эпӗ кӑҫалхи вӑхӑта вӗҫлерӗм, — пӗлтернӗ Хӗл. — Черет Ҫуркуннене. Унран пуҫлӑпӑр.

Çуркунне хавасланса ӗçе тытăнчӗ. Чи малтан вăл тӳпене тап-таса çуса тасатрӗ. Йăлкăшать кăна янкăр кăвак пӗлӗт. Кун хыççăн çур хуралса илемсӗрленнӗ юра шыв туса юхтарса ячӗ. Шыв-шура хупласа выртакан хавшакланнă пăра васкаса ирӗлтерчӗ. Вара ăшăнса çемçелнӗ çӗре капăрлатма пикенчӗ. Асамлă пӗчӗк арчине уçрӗ те чӗлтӗр симӗс пурçăн тутăр кăларса ăна ăшă çилпе тӗнче çийӗн вӗçтерсе ячӗ. Хуралса юлнă уй-хирсем çемçе курăкпа витӗнчӗç, çара йывăç турачӗсем, лапсăркка лутра тӗмсем илемлӗ симӗс тум тăхăнчӗç. Унтан Çуркунне янкăр тӳперен кăвак тӗс ыйтса илчӗ те ăна шывсем çине пăрахрӗ. Вара вӗсем те хӗвел çинче çурхи пӗлӗт пекех сенкеррӗн йăлтăртатма пуçларӗç.

Анчах Çуркунне кунпах ӗçне вӗçлемерӗ-ха. Кӗçех вăл тепӗр асамлă арчине уçрӗ, чечек çеçкисене ывăçла-ывăçла илсе вӗсене те çӗр çийӗн сапаласа салатрӗ. Пирвайхи чечексем курăнчӗç. Тӗрлӗ тӗслӗ йăмăх илемӗпе тавралăха тата та капăрлатрӗç. Пахчасенче улма-çырла йывăçӗсем шурă пурçăн пӗркенчӗкпе витӗнчӗç. Асамлă ăшă вăхăта мухтаса кайăк-кӗшӗк кунӗн-çӗрӗн хаваслă юрă шăратрӗ, хитре лӗпӗшсем выляса вӗçрӗç, савăнăçлăн нăйăлтатса вӗлле хурчӗ чечек çинчен чечек çине куçрӗ, тӗкӗлтура хулăн сассипе нăрăлтатса иртрӗ. Эх, мӗн тери илем ешерет таврара! Чăннипех асамлă ăста çутă Çуркунне, чăннипех мухтава тивӗçлӗ.

Ӗнтӗ пултарулăхне кăтартма çу кунӗсене черет çитрӗ. Вӗсем çур туса хăварнă илеме пăсас темерӗç. Чечексем те çаплах ешерчӗç, йывăç-курăк та симӗс тумне улăштармарӗ. Шăрăх кунсен ăсти чи малтан çумăр пӗлӗчӗсене чӗнсе илчӗ. Лешсем нумай кӗттермерӗç, кӗçех тӳпене хупăрласа илчӗç. Вутлă çиçӗм çипписем ялтăртатрӗç, аслати хаваслăн кӗмсӗртетрӗ. Шыв тумламӗсем тăкăнса типнӗ çӗре тăраниччен шăварчӗç те аяккалла кайса çухалчӗç. Кун хыççăн çу хӗвелтен ăшă ытларах пама ыйтрӗ. Вара çав ăшша çӗре, шыв-шура, сывлăша парнелерӗ. Мӗнпур ӳсен-тăран çӳлелле кармашма тытăнчӗ. Уй-хирсенче тинӗс пек вӗçӗ-хӗррисӗр тырă-пулă хумханчӗ, анкартисенче пахча-çимӗç ешерчӗ, çаран курăкӗ васкаса ӳсме тытăнчӗ. Мӗн тӗрлӗ чечек çук-ши унта! Мӗн чухлӗ

тĕс куçа илĕртмест-ши! Ырă тутлă шăршă, пыл шăрши, сăмсана кăтăкларĕ, пуçа минретрĕ. Анчах Çу кунпа çеç çырлахмарĕ-ха. Акă вăл хăйĕн асамлă пуракне уçрĕ те ăна çĕр çине ÿпĕнтерчĕ. Вăрмансенче, садсенче тĕрлĕ çырла пиçме пуçларĕ.

Юлашкинчен хĕвелпе çумăр пĕлĕчĕ ĕçчен асамçă тĕртсе тунă савăк кĕпер, асамат кĕперĕ, парнелерĕç. Çав çичĕ тĕспе йăлкăшса çунакан илемлĕ парнене хаваслă çу хупăрланса тăракан тĕксĕм çумăр пĕлĕчĕ çине çакса хучĕ. Вара пăрăнса виççĕмĕш ăстаçа вырăн пачĕ.

Кĕркунне ĕçе тытăнса чи малтан кăштах асамлă «холодильникне» уçрĕ, шывсем-шурсем çине темиçе татăк пăр ячĕ. Пăчă шăрăх йăвашланчĕ, шыв та сисĕнмеллех сивĕнчĕ. Тавралăх янкăрах çуталчĕ, уçăлчĕ. Аякри япаласем лайăхрах, витĕртерех курăнма пуçларĕç. Йывăçсен, тĕмсен симĕс тумĕ илемсĕрленнине курса Кĕр асамçă кушилĕнчен тĕрлĕ йăмăх сăр кăларчĕ те тĕксĕмленнĕ çулçăсене сăрла-сăрла илемлетме тытăнчĕ. Ларать халĕ капăр вăрман ялкăш хĕвел пайăркисемпе çуталса, çĕнĕ илемĕпе савăнса.

Унтан асамçă карçинккине уçрĕ. Мĕн чухлĕ çимĕç çук-ши унта! Çав пуянлăха тараватлă Кĕр пĕтĕмпех вăрмансене, сад пахчисене парнелерĕ. Шĕшкĕ пиçĕ турачĕсем çинче сарă мăйăр шереписем хуллен сулкаланаççĕ. Палан епле чипер, епле капăр! Йăлтăр-йăлтăр хĕрлĕ çырлисем аякранах курăнса куçа илĕртеççĕ. Ытти йывăçсенчен çулла нимĕнпе те уйрăлса тăман пилеше епле капăрлатнă кĕркунне. Унăн çинçе туратtисем çине сарăрах хĕрлĕрех çырла сапакисем çака-çака янă. Иртсе пынă чух епле асăрхамăн çав илеме, епле савăнса пăхмăн йăрăс пилеш çине! Сад пахчисенче тата! Улмуççи турачĕсем шултра пан улмийĕсен йывăрăшне чăтаймасăр çĕрелле усăннă… Çапла, кам чунне хускатмаççĕ, кама савăнтармаççĕ пулĕ илемлĕ те тараватлă ырă кĕр кунĕсем.

Юлашкинчен çурçĕр енчен шăвакан сивĕ юр пĕлĕчĕсемпе пĕрле тăваттăмĕш асамçă персе çитрĕ. Çаралса юлнă тумхахлă шăннă çĕре вăл кăпăшка шурă утиялпа хупларĕ.

— Çывăр, — пăшăлтатрĕ хĕл. — Кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕн, пайтах вăй хутăн. Халĕ кан.

Пур çĕре те вĕçе-вĕçе çитрĕç пĕчĕк çăмăл юр пĕрчисем. Кĕске вăхăтрах мĕнпур тавралăха шуратса çĕнетрĕç. Çурт-йĕрсем, картасем, телеграф юписем, пралуксем çине юр чĕнтĕрĕсем, юр çи виттийĕсем çака-çака тухрĕç.

Юр пĕлĕчĕсене çил аякка илсе кайсан кăн-кăвак тӳпе ялкăшса уçăлчĕ те, ылтăн хĕвел çаври курăнчĕ. Унăн çутă пайăркисем кăпăшка юр çине ӳксен, такам ывăçи-ывăçипех хаклă чул тĕпренчĕкĕсем сапнă евĕр, шурă тавралăхра тĕрлĕ тĕслĕ пиншер пĕчĕк çăлтăрсем йăлтăртатса çунма пуçларĕç. Çулçисем ӳкнипе тĕксĕмленнĕ йывăççем епле çуталса, чиперленсе кайрĕç! Сивĕ хĕл вĕсене пас пĕрчисенчен чĕнтĕрлесе тунă шап-шурă илемлĕ пĕркенчĕксем парнелерĕ. Пуринчен ытла сивĕ мучи шурă хурăна тăрăшсах капăрлатнă. Кĕрхи çил унăн саралнă çулçисене тата-тата пăрахнăччĕ, халĕ вăл йăлтăр-йăлтăр илемлĕ пĕркенчĕкпе витĕннĕ. Аякранах куçа илĕртет çинçе, пиçĕ туратлă хурăн хăйĕн хĕллехи тумĕпе. Йăрăс вуллинчен пуçласа тăрринчи чи пĕчĕк турачĕ таранах шап-шурă вăл халĕ. Ун пек капăрри урăх çук йывăççем хушшинче.

Маттур сивĕ хĕл. Пĕртен-пĕр шурă тĕс çеç унăн. Анчах мĕн тери ытарайми илем кӳме пултарчĕ таврана!..

Хаклакансем нумай канашласа лармарĕç, çулталăкри тăватă вăхăта та тавралăха çавăн пек тĕрлĕ илем кӳме пултарнăшăн «пиллĕк» паллăпа хакларĕç.





## УСРАВККА

*Калав*

Таçтан килнĕ тăватă ют çын кӳршĕсем патĕнче тĕрмешнине Алеша урамра сăнаса тăрать. Хуçисем пурăнма тахçанах хулана куçса кайнă. Пӳрчĕ миçе çул ĕнтĕ пушах ларать. Халĕ акă палламан арçынсем ăна салатса таçта илсе каяççĕ. Малтан вĕсем хăмасемпе хĕреслесе çапнă чӳречесене уçрĕç, кантăкĕсене кăлара-кăлара илчĕç, халĕ авă пӳрт тăррине витнĕ тимĕр листисене сӳме пуçларĕç.

— Эй, ачам, кил-ха кунта! — кăчăк туртса чĕнчĕ Алешăна арçынсенчен пĕри, çӳлте тăраканни. — Ме-ха, тыт, — терĕ вăл. Чĕркуçленсе ларчĕ те мĕнпур кĕлеткипе аялалла ӳпĕнсе чупса пынă Алеша енне аллине тăсрĕ. Ывăçĕнче темскер, чĕрĕскер, йăшăлтататать.

— Тыт, ан хăра. Кăвакарчăн чĕппи вăл.

Чăнах та, кайăк чĕппи иккен, анчах шутсăр имшерскер.

Тёкё çук, ӳчё пёркеленчёк, те хёрлё, те кăвак темелле ăна. Çапах алăра йăшăлтатать хăй.

— Пичче, мён тумалла ман унпа? — пуçне каçăртса ыйтрё çакăн пек парне кётмен ача.

— Усра, çитёнтер.

Алеша мёнле çитёнтермеллине ыйтса пёлесшёнччё, анчах арçын тек калаçса тăмарё, çавăрăнчё те мăлатукёпе тем шаккама тытăнчё.

Йёкёр ывăçёнче вăйсăррăн хускалакан пёчёк ăшă чăмаккана Алеша килне илсе таврăнчё, картишне ячё. Мён тумалла ёнтё халё унпа? «Хырăмё те выçă пулё, анчах мён çитермелле? Анне кёçех ёçрен килмелле-ха. Вăл пёлетех», — шухăшларё ача. Лăпланса вăл каллех пёчёк чёпё умне пёшкёнчё. Ытла та имшеркке çав, хальлёхе йёркеллё утма та пултараймасть. Авă каллех тăрăнса кайрё шеремет.

— Эсё ан хăра, ан тар манран. Эпё кӳрентерместёп сана, — мăкăртатрё вăл. — Пирён патра ӳсён. Çунаттусем çирёпленеççё акă, вара пăр-р вёçетён те каятăн ăçта кирлё унта. Эпё чармастăп. Яту çук-и-ха санăн? Апла пулсан, — ача кёске самант шухăшласа тăчё, — апла пулсан... Кăвик пул. Юрать-и?

Ăнсăртран Алеша ӳпле умёнче хускалмасăр выртакан Караç çине пăхса илчё. Темшён-çке кайăк чёппи çине тёлленё тăвата уралла тусён куçёсем килёшмерёç ăна. Акă йытă сăнчăрне чанкăртаттарса илчё, васкамасăр утса пычё те Кăвик çинчен куçне вёçертмесёр сиввён хăрлатса ячё.

— Караç, — терё Алеша ăна пӳрнипе хаяррăн юнаса. — Юрамасть Кăвике тивме! Илтетён-и? Ю-ра-масть!

Хăйпе çапла сиввён калаçнăшăн кӳреннё Караç пуçне аяккалла пăрчё. «Юрамасть пулсан юрамасть пултăр. Ухмах мар, кăшкăрмасăрах ăнланатăп», — терё унăн ӳпкелекен пичё-куçё. Йытă пăрăнчё, çавăрăнчё те хăйён малтанхи вырăнне кайса выртрё.

Çапах йăлăхтарать картишёнче вёçёмсёр пёччен ларма. Темшён-çке амăшё те халиччен ёçрен килмерё. Йёкёреш çуралнă Нюшка пур-ха. Урамран чупса кёрсе Кăвик çине пёр хушă аякран пăхса тăчё вăл, анчах Алеша кăштах лар-ха те-

сенех вёлт çавранчĕ те тухса сирпĕнчĕ. «Юрĕ, эпĕ те кирлĕ пулăп-ха. Аса илтерĕп ун чух паянхине», — ăшĕнче кӳренсе шухăшларĕ ача яркăн тăванĕ çинчен...

Ах, ытла та тунсăх-çке картишĕнче пĕччен ларма.

— Караç, вăрçатăн-и мана пaçăр кăшкăрнăшăн? — пырса ларчĕ Алеша тусĕ патне. — Ан çиллен. Юрать-и? Эпĕ юрататăп сана.

Йытă каçарнине пĕлтерсе ăна питĕнчен çуласа илчĕ.

Çав самантра пӳрт тăррине темиçе кăвакарчăн пырса ларчĕ. Унтан вĕсенчен иккĕшĕ картиш варринче хускалмасăр ларакан пĕчĕк чĕпĕ патне вĕçсе анчĕç.

— Караç, шăп вырт, ан хускал, — пăшăлтатрĕ Алеша тусне мăйĕнчен ыталаса. — Кусем пирĕн Кăвикĕн ашшĕпе амăшĕ пулас...

Ăслă йытă, ăнланатăп сана тенĕн, хуллен нăйкăшса илчĕ çеç. Вĕçсе аннă кайăксем йĕри-тавра асăрхануллăн пăхса илчĕç. Чĕппи вăйсăр урисемпе тайкалана-тайкалана утса пырсан вĕсенчен пĕри пуçне ун енне пĕкрĕ те çăварне карчĕ. Вара — акă тĕлĕнтермĕш! — Кăвик пĕр тăхтамасăр сăмсине карнă çăвара чиксе ячĕ, тĕрткелешрĕ, турткалашрĕ, пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа тапăлтаткаларĕ, юлашкинчен тăсăлакан шурă шĕвеке сăмси тăрăх юхтарса пуçне ирĕке кăларчĕ. Каярахпа пĕлчĕ Алеша: кăвакарчăнсен пĕчĕк чĕпписене çитермелли апачĕ пĕсехере иккен. Шурă тĕслĕ пулнăран-ши, ăна кăвакарчăн сĕчĕ теççĕ.

Хырăмне тăрантарсан Кăвик пĕчĕк чăмăркка пулса хутланса ларчĕ, тĕлĕрсе кайрĕ пулас, хускалмарĕ. Алеша сарайĕнчен машина илсе тухрĕ, пĕчĕк кĕреçепе ăса-ăса пикенсех хăйăр тиеме тытăннăччĕ, сасартăк кĕтмен хăрушлăх сиксе тухрĕ.

Пахча енчи лутра сарай çинче Мăруш кушак курăнчĕ. Çивĕч куçĕпе картишĕнче мĕн пурри-çуккине хăвăрт пăхса çавăрăнчĕ те хутланса ларакан кăвакарчăн чĕппине курах кайрĕ. Мăруш пĕр тăхтамасăр малтан çывăхри вутă шаршанĕ çине çăмăллăн сиксе анчĕ, унтан — кил картине. Тăвата ури çине лăпчăнчĕ те симĕс куçне ялтăртаттарса Кăвик патне хуллен, шăппăн йăпшăнса пыма пуçларĕ.

— Хав! — хаяррăн янрарĕ çиллес сасă. — Хав! Ан тĕкĕннĕ пултăр!

Лекетчĕ-ха çăткăн вăрă-хураха, анчах Мăруша Караç сăнчăрĕ кĕскерех пулни çăлчĕ. Çакна кĕтмен кушак каялла сикрĕ, çурăмне пĕкĕ пек аврĕ, хӳрине юпа пек тăратрĕ, йытă енне çивĕч шăлĕсене хăрушшăн йĕрсе, хаяррăн чăшлатса ячĕ.

— Х-х-х!.. Сана мĕн ĕç пур кăвакарчăн чĕппипе? — терĕ пулас вăл.

Анчах тивме хăяймарĕ. Алеша чупса пынине курсан пӳрт айнелле вирхĕнчĕ çеç.

Савăннă ача каллех тусне пырса ыталарĕ.

— Мĕнле маттур эсĕ, Караç! Тавтапуç сана! Унсăрăн йăтса таратчĕ вĕт çăткăн Мăруш пирĕн Кăвике.

Унтан ача пуçне телейлĕ шухăш пырса кĕчĕ.

— Караç, эпĕ халĕ урама каятăп. Мана унта юлташсем кĕтеççĕ. Сыхла эсĕ Кăвике, никама та кӳрентерме ан пар. Уншăн эпĕ сана каçхине какайпа хăналăп. Аннерен ыйтатăп çеç. Вăл лайăх, ырă кăмăллă. Сана юратать.

Урамра вылянă чух та Алеша кил картинче юлнă имшеркке, хӳтĕсĕр кайăк чĕппи çинчен манмарĕ. «Караç тивмерĕши ăна?» — темиçе хутчен те пыра-пыра кĕчĕ пуçа шиклĕ шухăш. Çук, сывах, чиперех ларать. Ĕнтĕ Кăвикшĕн шикленме кирлĕ мар. Мăруш тек çывăха пыма та хăяймĕ ун патне. Мĕншĕн тесен халĕ ăна Караç хураллать.

Каç пуласпа кăвакарчăн ушкăнĕ каллех пӳрт тăррине пырса ларчĕ, иккĕшĕ каллех картишне вĕçсе анса чĕппине тăрантарчĕç. Пĕри çитерет, тепри тимлĕн йĕри-тавра пăхса тăрать. Хураллать ĕнтĕ юлташне тĕрлĕ хăрушлăхран. Çук, ахалех иккĕленчĕ Алеша Караç пирки. Йытă Кăвике те тивмерĕ, çывăхах вĕçсе анакан кăвакарчăнсене те хăратмарĕ. Хĕвел анса çанталăк сулхăнлатсан çара ӳтлĕ Кăвик хăех Караç еннелле тĕнкĕлтетрĕ. Темле майпа сисрĕ вăл ун патĕнче ăшă тупасса. Çывхарчĕ те пуçĕпе çемçе лăпсăркка çăмлă кĕлеткене перĕнчĕ. Караç та ăнланчĕ ăна, ачашшăн çуласа илчĕ те çывăхах куçса выртрĕ.

— Усрава илнĕ вăл ăна. Ӳплере юнашарах выртаççĕ, —

илтрĕ Алеша ирхине ашшĕн хаваслă сассине. Ашшĕпе амăшĕ кам çинчен каланине ача ăнланчĕ, кулса ячĕ те каллех тутлă ыйха путрĕ.

Çапла ӳсрĕ Кăвик. Кăвакарчăнсем чылай вăхăт пĕчĕк чĕппине кашни кунах пыра-пыра тăрантарчĕç. Çынсем те, пысăк йытă та пĕчĕк чĕппе кӳрентерменнине курчĕç пулин те асăрхануллă кайăксем вĕсене нихăçан та хăйсен çывăхне ямастчĕç. Яланхи пекех, вĕсем ушкăнпа вĕçсе пыраççĕ, картишне иккĕн анаççĕ. Пĕри тăрантарать, тепри ăна хураллать.

Ёнтĕ Кăвикĕн илемсĕр çара ӳчĕ малтан çемçе мамăкпа, унтан чăн-чăн тĕкпе витĕнчĕ, урисем çирĕпленчĕç. Çуртсем çине час-часах пырса ларакан кăвакарчăнсем кил картине анма пăрахрĕç. Кăвик килти чăх-чĕппе сапса панă тырă-пулла сăхасăха çиме пуçларĕ. Уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и, пĕр хĕвеллĕ çутă ир усравкка кайăк çуначĕсене сарчĕ те вăр-р çĕкленсе пӳрт тăрринче ларакан юлташĕсен ушкăнне вĕçсе хăпарчĕ. Тӳрех пăрахса каймарĕ вăл хăй ӳснĕ картиша. Пĕр-икĕ хут анчĕ, чăхсемпе те апат çирĕ, Караç çывăхне те пыра-пыра ларчĕ.

Çапла икĕ-виçĕ кун иртрĕ. Унтан Алеша ăна куçран çухатрĕ. Темле тилмĕрсе пăхсан та çывăхри кăвакарчăнсем хушшинче вăл хăйĕн усравккине паллаймарĕ, темле ачашшăн чĕнсен те Кăвик ушкăнран уйăрălса тек картишне анмарĕ. Йытă хуллен найкăшнине илтсен çеç вăл вĕçсе килнĕ кайăк ушкăнĕнче Кăвик та пуррине ăнланса илетчĕ. Каярахпа Караç та пĕчĕк тусне чĕнме пăрахрĕ, вăл та паллайми пулчĕ пулас.





## ХАСТАР МĂРЛУШ

*Юмах*

Пурăнать тет пĕр килте кушак çури. Хĕрлĕ тĕслĕ çăмламас тумĕ хĕвел çинче кăвар пек йăлкăшать, çилпе вĕл-вĕл тăвать. Çивĕч, çăмăл кушак. Выляс тесен каççах каять, шăшисене кунĕн-çĕрĕн хăвалать. Чупса ывăнсан арча çине сиксе хăпарса сехечĕ-сехечĕпе çывăрать.

Ăшĕнче унăн пĕчĕк çеç мотор пур тейĕн, çурăмĕнчен ачашласанах мăр-мăр тума тытăнать.

— Ах, Мăрлуш! Чипер пĕчĕк Мăрлуш! — тет пĕррехинче хĕр ача тăвата ураллă тусне ачашласа.

Çавăнтан пуçласа кушак çурине пурте Мăрлуш тесе чĕнме тытăнаççĕ.

Пĕррехинче Мăрлуш шăши тытаймăп-ши тесе тĕттĕм кĕлете йăпшăнса кĕрет. Пăхать: урайĕнче халиччен курман темĕнле чĕр чун чупкаласа çӳрет. Урисем кĕске, хӳри вăрăм. Куçĕ

сăхă, тем шыраса вěçěм унталла-кунталла пăхкалать. «Йěке хӳре! — тавçăрса илет Мăрлуш. — У-у сěмсěр, выçă Йěкерук!» — ятне те çавăнтах тупать вăл.

Йěке хӳре кушак çури çине çаврăнса та пăхмасть-ха, чупкалать-чупкалать те кěтесри шăтăка кěрсе çухалать.

Таврара çав вăрă-хурах кěрсе тухман вырăн та юлман иккен. Пур çěре те çитнě вăл, пур çěрте те ухтарнă, çаратнă. Çынсем çиес апат-çимěçе вараланă, хăй шăтăкне туртнă, пěчěк чěпсене пăва-пăва сěтěрнě, выльăх-чěрлěхе, ача-пăчана хăратнă.

Пěррехинче çапла кил хуçи хěр ачи юратнă пуканине йăтса картишне тухрě. Çав вăхăтра урамра ача-пăча шавлатчě, тахăшě хěр ачана ятранах чěнсе илчě. Лешě вара пуканине пěчěк тенкел çине лартрě те тантăшěсем патне чупрě.

— Люлю, ан йěр. Эпě кěçех килетěп! — тесе хăварчě вăл пуканине.

Вăхăт нумай та иртмерě, таçтан йěке хӳре тухрě. Унталла-кунталла пăхрě — çывăхра никам та çук. Вăл вара пукане патне йăпшăнса пычě те ăна çивěч шăлěсемпе уринчен çаклатса васкасах хăй шăтăкне туртса кěрсе кайрě.

— Анне! Анне! — йěре-йěре кăшкăрчě мăнтарăн пукани, анчах ăна никам та илтмерě.

Йăвине сěтěрсе кěрсен Йěкерук пуканене пӳлěм варрине тăратрě, шăлне йěрсе ăна çавăркаласа пăхрě. «Чиперскер иккен эсě. Кăпăш, кăтра, куçу хирти чечек пек кăн-кăвак, туту пиçнě çырла тейěн», — хăй тěллěн калаçать Йěкерук.

Çав вăхăтра тем тума-çке Йěкерук патне унăн кӳрши Шăшикке ятлă шăши йăпăртатса кěчě.

— Ой! — тăпах чарăнчě вăл пуканене курсан. — Люлю вěт ку! Ăçтан лекнě вăл кунта?

Йěкерук кулкаласа пуçне усса тăракан пукане çине пăхса илчě.

— Каснă лартнă çын... Çынсем çакăн пек пěчěк те вăйсăр пулас пулсан... Тěнчере йěке хӳре хуçа пулěччě, этем вара — унăн чури.

— Эх, çитěччě вара пурнăç! — хавхаланчě Шăшикке те. — Ун пек пулсан эпир мар, çынсем пирěнтен хăраса-чěтресе

пуранӗччӗҫ. Кушак таврашне те тӗпренех пӗтерӗттӗмӗр, — Шăшикке ассăн сывласа ячӗ. — Мăрлуш кунран-кун усалланса пырать-ҫке. Эпӗ ҫут тӗнчене пуҫа кăларса пăхма та хăяймастăп халӗ. Сана та юнать тет. «Ӳссе вăйланам кăна. Шăрши те юлмасть ҫав харам пырăн пирӗн кил ҫывăхӗнче», — тесе мухтанать тет.

Йӗкерук куҫӗсем хаяррăн йăлтăртатрӗҫ.

— Ҫывхартăр ҫеҫ. Кăтартатăп эпӗ ăна харам пыр мӗнлине. Ун пеккисене кăна мар вӗрентнӗ, — мухтанчӗ вăл ҫивӗч шăлӗсене йӗрсе.

— Вăт-вăт. Тем пекехчӗ кăтартсан. Ах, лайăхчӗ, — каллех хавхаланчӗ Шăшикке.

Икӗ вăрă-хурах Мăрлуша пӗтерме канаш тунине илтсен Люлю чăтаймарӗ, сасăпах йӗрсе ячӗ.

— Юрӗ, юрӗ. Ҫитет нăйкăшса, — сиввӗн чарчӗ ăна Йӗкерук. — Малашне ман патра пурăнăн, эпӗ хушнине тăвăн. Тарма ан шутла. Ниҫта та каяймастăн. Ăнлантăн-и? Мӗн тăнккаса тăратăн тата? Кай, тытăн ӗҫе... Тăхта. Хывса хур ку илемлӗ тумна. Малашне ăна ман хӗрӗм тăхăнӗ. Сана акă урăх тумтир, тăхăн часрах, — ҫапла каласа Йӗкерук урайӗнче йăваланса выртакан таса мар ҫӗтӗк-ҫатăка пукане ури патне пăрахрӗ.

Иккӗшех юлсан йӗке хӳре шăши енне ҫаврăнчӗ.

— Пукане кунти ҫинчен никама та ан кала, шăпăрт пул, шăл шурри те ан кăтарт.

— Паллах, паллах, — шиклӗн пиклетрӗ Шăшикке. — Пӗтӗмпех хамăр хушăра юлӗ.

Ҫапла вара Люлю усал Йӗкерук патӗнче мӗнле пурăннине Шăшикке кăна пӗлнӗ, анчах вăл, пуплеме юратнă пулин те, никама та каламан. Хăрана.

Пӗррехинче кăнтăрлахи апата мӗн те пулин ҫаклатса килме пулмӗ-ши тесе шăши шăтăкӗнчен тухрӗ кăна, ҫавăнтах кушак ҫури ытамне лекрӗ. Тытăнчӗ тархаслама:

— Ан тив мана, ырă Мăрлуш. Яр ирӗке. Уншăн эпӗ сана никама калама хушман хыпар пӗлтерӗп.

— Мӗнле хыпар?

— Ирӗке яратӑп тесе тупа ту.

— Юрӗ, чӑннипех тивӗҫлӗ хыпар пулсан тивместӗп.

— Итле, эппин, — хӑранипе аран-аран сывлӑш ҫавӑрса пӑшӑлтатрӗ шӑши. — Хуҫа хӗрӗн юратнӑ пуканине Йӗкерук хӑй шӑтӑкӗнче тарҫӑра усрать... Курсан шелленипе кӑшт ҫеҫ йӗрсе ямарӑм. Тумӗ ҫӗтӗк-ҫатӑк. Кунӗн-ҫӗрӗн йывӑр ӗҫпе асапланать, тулли михӗсем, пысӑк карҫинккасем ҫӗклет, тем тӗрлӗ апат-ҫимӗҫ чыхса тултарнӑ пӳлмесене тасатса уҫӑлтарать, нумай пӳлӗмлӗ пӳрте тирпейлет. Пӗчӗк йӗке хӳресене те вӑлах пӑхать. Чӑркӑш Йӗкерук вӗҫӗмсӗр хирӗлет, ялан мӗнле те пулин кӑлтӑк тупса кӳрентерме тӑрӑшать. Хӗнеҫҫӗ ӑна, мӗскӗне... Ҫурисем те амӑшӗнчен юлмаҫҫӗ. Ҫивӗч чӗрнисемпе ҫара уринчен, аллинчен чӗрмелеҫҫӗ, шӗвӗр шӑлӗсемпе ҫыртаҫҫӗ.

— Ара, Люлю вӗт ку! — тавҫӑрса илчӗ Мӑрлуш пукане ҫинчен асӑнсанах. — Эпир ӑна кунӗн-ҫӗрӗн шыратпӑр. Авӑ ӑҫта иккен вӑл. Ай-яй-яй!

Ирӗке янӑ шӑши шӑтӑка тарса кӗрсен кушак ҫури тарӑн шухӑша кайрӗ: «Пуканене ҫӑлас пулать. Анчах мӗнле? Йӗкерук вӑйлӑ. Вӑл йытта хирӗҫ сикме хӑрамасть. Эпӗ вара пӗчӗк кушак ҫури ҫеҫ».

Мӑрлуш чи малтан йӗке хӳре ҫул-йӗрне лайӑххрах тӗрӗслеме шут тытрӗ. Мӗн чухлӗ шӑтӑк! Анчах вӑрӑ-хурах ытларах пӗринпе кӑна усӑ курать. Пахчара, сарай хыҫӗнче, пысӑк пӗрене выртать. Ун ҫумӗнче ҫӑра вӑрӑм курӑк ӳсет. Йӗке хӳре ҫав пӗрене айӗнчи ҫулпа час-часах тухса ҫӳрет.

— Юрӗ, — кӑмӑллӑн мӑрӑлтатрӗ кушак ҫури лутра сарай тӑррине хӑпарса. — Кунта эпир сӑнав пункчӗ тӑвӑпӑр.

Ҫав вӑхӑтрах пӗрене айӗнчи шӑтӑкран, чӑнах та, ҫӑткӑн хурах тухса кайрӗ.

Мӑрлуш сарай ҫинчен siксе анса картишӗнче темӗн шырама тытӑнчӗ. Кӗҫех вӑл ҫинҫе пӑралук тупрӗ те унӑн вӗҫне йӗке хӳре шӑтӑкӗ ҫывӑхне чавса пытарчӗ, теприне каллех сарай ҫине улӑхса хӑй ларнӑ вырӑна ҫирӗплетсе хучӗ. Унтан кил хуҫи хӗрарӑмӗнчен какай татӑкӗ ыйтса илсе ӑна шӑтӑк ҫывӑхне пырса хучӗ, вара хӑй татах сарай ҫине хӑпарса вырнаҫрӗ. Вӑхӑт нумай та иртмерӗ — шӑтӑкран пӗчӗк йӗке хӳре

куранчĕ. Ку Йĕкерук ачи ĕнтĕ. Нăш-нăш! шăршларĕ вăл. Какай шăршине сиссе çамрăк хурахăн вăрăм уссийĕ чĕтренсе илчĕ. Хăрушлăх çинчен шухăшламасăр Йĕкерук ачи тӳрех аш татăкне илме тăчĕ. Çакна кĕтнĕ Мăрлуш ун çине ялт сикрĕ. Йĕке хӳре куç хупма та ĕлкĕреймерĕ, кушакăн вирлĕ чĕрнисем хушшине çакланчĕ. Ыратнипе, хăранипе вăл çухăрса ячĕ. Мăрлуш сарай çине сиксе те хăпарчĕ. Ак хайхи Йĕкерук хашкаса чупса çитрĕ. Ывăлĕ кушак чĕрнийĕсем хушшинче тапăлтатнине курсан унăн пĕтĕм кĕлетки-çурăмĕ чĕтресе кайрĕ, пĕр хушă вăл сывлайми пулчĕ.

— Халех янă пултăр! — хăрăлтатрĕ Йĕкерук хаяррăн. Çивĕч чĕрнисемпе пĕренесенчен çаклатса вăл сарай çине хăпарма тăчĕ.

— Эй, кĕске ура! Ăçта тапăлтататăн? — тăрăхларĕ Мăрлуш Йĕкерук çине çӳлтен аялалла пăхса. Мана хуса çитесшĕн-и?

Мĕн тăвăн? Итлемелле пулчĕ. Йĕке хӳре аялалла лӳпперрĕн сикрĕ.

— Эсĕ ман юратнă тусăн пуканине вăрласа кайнă, ăна тарçăра асаплантарса усратăн. Ачуна çăлас тетĕн пулсан... — терĕ Мăрлуш.

— Пустуй сăмах. Нимĕнле пукане те çук ман патăмра, — пӳлчĕ ăна Йĕкерук сиввĕн.

Мăрлуш чĕнмерĕ, çивĕч чĕрнисемпе кăна кăштах пăчăртарĕ. Пĕчĕк йĕке хӳре каллех турткалашма, çухăрашма тытăнчĕ.

— Юрĕ... Килĕшетĕп, — терĕ Йĕкерук çури çуйăхнине тек тӳсеймесĕр. — Анчах асту, усал кушак çури, улталама ан шутла!

— Ман сăмах çирĕп, — терĕ Мăрлуш мăнаçлăн.

Йĕкерук тĕттĕм шăтăка чăмса унтан пуканене илсе тухрĕ.

Мăнтарăн пукани! Епле улшăнса кайнă вăл! Кăпăш çӳçĕ тирпейсĕррĕн сапаланнă, халĕ кăна çурăлакан чечек евĕр илемлĕ сăнĕ шурăхса тĕксĕмленнĕ, алли-ури çинче темĕн чухлĕ суран.

Çакна курсан Мăрлуш куçĕсем хаяррăн йăлкăшрĕç.

— Мĕншĕн çĕтĕк-çатăк тум ун çийĕнче? — хăйăлтатрĕ вăл усал пусмăрçă çине кĕç-вĕç сиксе ларас пек пăхса. — Халех унăн илемлĕ тумне тупса пар.

Йĕкерук каллех шăтăка кĕрсе çухалчĕ те ним чĕнмесĕр пуканен пурçăн кĕпине курăк çине илсе тухса хучĕ.

— Пар ывăлăма, мĕн тытса тăратăн тата?

— Халех, — терĕ Мăрлуш юриех васкамасăр. — Тӳсĕмлĕрех пул. Манăн каламалли татах пур... Пăх-ха, куратăн-и çак пралука? Ăçта пулĕ тетĕн эсĕ унăн тепĕр вĕçĕ? Шăп сан йăву айĕнче. Кăшт çеç туртас пулать... Чухлатăн-и вара мĕн пуласса?.. А, пĕлетĕн апла. Кунти вырăнсенчен тухса тасалма сана çур сехет паратăп. Итлемесен йăву та, ачу-пăчу та — пĕтĕмпех татăкăн-татăкăн сирпĕнсе арканĕ... Анчах асту, Йĕкерук, çыртса татма ан шутла... Асăрхаттаратăп.

Çапла каларĕ те Мăрлуш йĕке хӳре çурине чĕрне хушшинчен кăларчĕ. Лешĕ сарай хĕррине чупса пырса тӳрех амăшĕн ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Йĕкерук ăна пĕр-икĕ хут çатлаттарса илчĕ те хăвăртрах шăтăкне тĕртсе кĕртсе ячĕ.

— Асту, Мăрлуш, — юнарĕ вăл çивĕч шăлĕсене усаллăн йĕрсе. — Кăтартăп-ха эпĕ сана. — Вăртах пăрăнчĕ те симĕс курăк ăшĕнче çухалчĕ...

Тавралăх шăплансан Шăшикке хăйĕн шăтăкĕнчен йăпăртаттса тухрĕ.

— Хе-хе, — хаваслăн сиккелерĕ вăл. — Вăт телей! Çулу телейлĕ пултăр, кӳршĕ. Эсĕ кунтан кайсан мĕн чухлĕ пурлăх юлать... Ха, — терĕ вăл тепĕр самантран ĕнсине хыçкаласа. — Эпĕ, пĕчĕк шăши, Мăрлуш тусĕн юратнă пуканине асапран çăлтăм-çке. Çавăнпа вĕсен мана ĕмĕр тăршшĕпе тав туса пурăнмалла. Ăçта кайса çухалчĕ çав кушак çури? Калаçас пулать манăн унпа. Тек нихçан та тивместĕп тесе хут çырса патăр. Мана та, ачасене те. Унсăрăн... — Шăшикке хăй патне йăпшăнса пыракан кушак çурине асăрхарĕ те вĕлт кăна тарса пытанчĕ.

Чăн та, çав кунтан пуçласа йĕке хӳре ашкăнма пăрахрĕ. Инçете тарчĕ пулас — тек ун çинчен сас-хура илтĕнмерĕ.

Хĕр ача пукане тупăннăшăн питĕ савăнчĕ. Ăна шыва кĕртсе таса тум тăхăнтартрĕ, унтан суранĕсене эмеллесе таса вырăн çине вырттарчĕ.

— Çывăр. Хăвăртрах сывал, — пăшăлтатрĕ вăл. — Тек

эпӗ сана нихҫан та ҫапла пӗччен пӑрахса хӑвармӑп... Мӑрлуш тусӑм! — кушака урайӗнчен ҫӗклесе ҫупӑрларӗ хӗр ача. — Эсӗ мана нимӗн те пӗлмест тетӗн пулӗ-ха. Эпӗ пӗтӗмпех пӗлетӗп. Мана Люлю каласа пачӗ. Эсӗ питӗ ӑслӑ, питӗ ырӑ кушак ҫури. Тавтапуҫ сана пуканене ҫӑлнӑшӑн.

— Мӑр-р! Мӑр-р! — терӗ Мӑрлуш ачашланса. — Мӗн калаҫмалли пур ун ҫинчен! Туссене пулӑшма эпӗ яланах хатӗр.

* * *

Усал Йӗкерука хуса янӑранпа ҫулталӑк ҫитрӗ. Ҫак вӑхӑтра пӗчӗк Мӑрлуш ӳссе тӗрекленчӗ, ҫитӗннӗ кушаксен шутне кӗчӗ. Унчченхи пекех вӑл ҫивӗч, ҫӑмӑл, халӗ те кил хуҫи хӗр ачипе туслӑ. Кӗҫех тахҫан йӑва ҫавӑрнӑ кил-ҫуртран Шӑшиккен те тухса тарма лекрӗ.

— Пурӑнма май ҫукчӗ. Чӳречерен пуҫа кӑларса пӑхма хӑракан пултӑм. Пур ҫӗрте те Мӑрлуша кураттӑм, — каласа парать тет шӑши кӳршисене ҫӗнӗ вырӑнта.

Анчах кил-ҫурта харам пырсенчен тасатрӗ пулин те, Мӑрлуш лӑпланса лармасть, кӑнтӑрла та, ҫӗрле те тимлӗ вӑл.

Нумай пулмасть кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн Мӑрлуш картишне тухрӗ. Ампар айне, мӗнпур ҫурт-йӗре кӗре-кӗре тӗрӗслерӗ те кӑшт канма тесе хӗвел ӑшшине выртрӗ. Ҫуллахи кун янкӑр уяр, ӑшӑ. Ҫывӑхрах чӑхсем какалаҫҫӗ. Автанӗ те инҫе мар, тислӗк купи патӗнче тем шырать. Кунтах чӑх чӗпписем шиплетсе чупкалаҫҫӗ. Амӑшӗ те ҫавӑнтах ачашшӑн кӑлӑклатса ҫӳрет, айван ачисене пурнӑҫ йӗркине вӗрентет.

Хӗвел ҫутинчен куҫне хӗссе Мӑрлуш кӑн-кӑвак тӳпенелле пӑхса илчӗ. Ҫӳлте, пуҫ ҫийӗнче, ҫуначӗсене икӗ енне сарса хурчка васкамасӑр ярӑнса вӗҫет. Картишӗнче мӗн пуррине ҫивӗч куҫӗпе сӑнать.

«Епле илемлӗн вӗҫет, — шухӑшларӗ Мӑрлуш. — Хам ӗмӗрте пӗрре те пулин ҫавӑн пек ҫӳле ҫӗкленсе курасчӗ. Шел, ҫунатӑм ҫук». Ҫапла шухӑшларӗ те тепӗр аякӗ ҫине ҫаврӑнса куҫне хупрӗ. Кӑтӑш пулнӑччӗ кӑна, сасартӑк чӑхсем шуйханса кӑтиклетни хӑлхана пырса кӗчӗ. Ҫавӑнтах тахӑшӗ ҫухӑрса ячӗ:

— Хурах! Пулӑшӑр! Пулӑшӑр!

Мăрлуш сиксе тăчĕ. Мĕн пулнă? Кама пулăшмалла? Пăхать — картишĕнче чăхсем те, автан та çук. Халĕ кăна чĕпсем чупкаласа çӳренĕ вырăнта пысăк кайăк çапкалашать. Ун умĕнче чĕп амăшĕ тапăлтатать. Çуначĕсене сарнă, тĕкне тăратнă, куçĕ хĕрелсе кайнă, сиксе тухас пек хăрушшăн ялкăшать.

— Хурах! Пулăшăр! Пулăшăр! — вĕçĕмсĕр çухăрать чăх вăйлă тăшманне хирĕç сиксе.

Хастар чĕреллĕ Мăрлуш çакна тек лăпкăн пăхса тăма пултараймарĕ. Чăх-чĕппе сыхласси, паллах, кушак ĕçĕ мар. Çапах тăван картишĕнче темиçе утăмра усал хурах пуçтахланнине епле чăтăн? Айăпсăр чĕпсене те шел. Авă епле хăраса ӳкнĕ вĕсем, мĕскĕнсем...

Мăрлуш куçĕсем йăлкăшса илчĕç. «Ах, путсĕр! Вăт çăткăн!» — шухăшларĕ кушак. Урисене пĕр çĕре пуçтарса, хăлхине хĕстерсе вăл çĕр çумне лăпчăнчĕ.

Хурчка чăхха вăйлă кăкăрĕпе тĕрте-тĕрте ярса чĕп патне ыткăннăччĕ кăна, шăп çав вăхăтра хăр-р туса Мăрлуш кайăк çурăмĕ çине сикрĕ.

— Х-х-х! — сасă пачĕ вăл.

Çакна кĕтмен хурчка каялла талпăнчĕ, ыратнине тӳсеймесĕр темиçе хутчен туртăнкаласа, сиккелесе илчĕ. Çапах сăхас шутпа кукăр сăмсине кушак енне пăрчĕ. Мăрлуш хăйне кӳрентерме памарĕ, малти урине вĕçертрĕ те хурчкана пуçĕнчен ыратмаллах чавса илчĕ. Çăлăнма хăтланса кайăк çуначĕсене сулкалама тытăнчĕ те сывлăшалла çĕкленчĕ. «Ай, эпĕ те вĕçетĕп!» — шухăшласа илчĕ Мăрлуш чылаях хăраса.

Чи малтан вĕсене урамра вылякан ачасем асăрхарĕç.

— Пăхăр-ха, пăхăр! Хурчка кушака çуначĕ çине лартса таçта илсе каять! — тĕлĕнсе кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Ай-уй! Чăнах та! — сасă пачĕç çитĕннĕ çынсем те.

— Мăрлуш вĕт ку! Мăрлуш! Мăрлуш! — кăшкăрчĕ пĕчĕк тусĕшĕн хăраса ӳкнĕ хĕр ача.

Анчах кушак ăна илтмерĕ, кайăк ӳт-тирĕнчен тата çирĕппрех тытрĕ çеç. Хурчка кушака çурăмĕ çине лартса ярăнтарнине кĕçех пĕтĕм ял хаваслăн сăнаса пăхса тăчĕ.

Хурчка тек тӳсеймерӗ, ҫырма урлӑ аран-аран каҫрӗ те сухаланӑ ҫӗр ҫине анса ларчӗ.

Калама ҫук савӑннӑ Мӑрлуш пӗр самант та тӑхтамарӗ, чӗрнине вӗҫертрӗ те, хӑйне такам ывӑтса янӑ пек, тарӑн ҫырма тӗпнелле вирхӗнчӗ.

«Вӗҫсе куртӑм! — шухӑшларӗ вӑл хӑрани иртсе кайсан. — Ҫӳлтен аялалла пӑхма хӑрушӑрах та, анчах пурпӗр лайӑх. Мӗнпур яла тӗлӗнтертӗм. Пирӗн картишне урӑх анмӗ ку хурчка».

Лапсӑркка хӗрлӗ тумне шӑлса якатнӑ хыҫҫӑн Мӑрлуш васкамасӑр килнелле утрӗ.

Паттӑр кушака картишӗнче хапӑл тусах кӗтсе илчӗҫ. Хурчкаран ампар айне кӗрсе тарнӑ кӗрнеклӗ автан хӗрлӗ киккириккине айӑплӑн силлесе Мӑрлуш умӗнче хӑюсӑррӑн пуҫне тайрӗ те тулӑ пӗрчи пырса хучӗ. Анчах хастар кушак хӑравҫӑ ҫине ҫавӑрӑнса та пӑхмарӗ, кӑпӑшка илемлӗ хӳрине мӑнаҫлӑн ҫӗклесе иртсе кайрӗ.

Чӗп амӑшӗ Мӑрлуша хаваслӑн кӑлӑклатса тав турӗ. Пӗчӗк чӗпсем хӑйсене вилӗмрен хӑтарнӑ хастар кушак умӗнче, салтаксем пек, пуҫӗсене маттуррӑн ҫӗклесе, урисене ҫирӗппӗн пусса ута-ута иртрӗҫ.

— Мӑрлуш! Мӑрлуш таврӑнчӗ! — илтӗнчӗ ҫав самантрах хаваслӑ сасӑ. Картишне чупса кӗнӗ хӗр ача кушака йӑтса илсе хӑй ҫумне ҫупӑрларӗ.

— Кала-ха, тархасшӑн, мӗнле хӑрамарӑн эсӗ ҫавӑн пек ҫӑткӑн, вӑйлӑ кайӑк ҫине утланса ларма? — ыйтрӗ вӑл.

— Мӑр-р, мӑр-р, — терӗ лешӗ ачашланса, — пӗчӗк чӗпсене хӳтӗлерӗм. Тата... вӗҫес килчӗ.





## ХĔЛ МУЧИ КИЛСЕН

*Калав*

Вутă турттарма кайнă Валерка ашшĕ вăрмантан сип-симĕс лапсăркка чăрăш тиесе килчĕ. Лав çине çыхса хунă çӳллех мар хитре йывăça салтрĕ те тарăн юр çине тăрăнтарчĕ.

— Ку сана. Ыран Çĕнĕ çул çитет. Пĕлетĕн-и эсĕ çавна? — терĕ вăл çумрах тăракан пĕчĕк ывăлне.

— Хĕл Мучие курмарăн-и? Килет-ши вăл пирĕн пата кăçал? — ыйтрĕ Валерка çӳллĕ те патвар кĕлеткеллĕ ашшĕ çине пуçне каçăртса пăхса.

Валерка пурăнакан ял пысăк мар. Кунта шкул та, ача сачĕ те çук. Çавăнпа кĕçехултта каять пулин те вăл чăн-чăн Хĕл Мучие халиччен курман. Çав асамлă Мучи нумай çĕре кашни Çĕнĕ çулах килнине, тутлă кучченеçсем парнеленине Валерка аслăрах юлташĕсенчен илтнĕ çеç.

— Хĕл Мучие кĕтетĕн апла, — сăмах хушрĕ ашшĕ вутти-

не пушатса пĕтерсен. — Чĕнсен килет пулĕ. Хĕл çинчен сăвăсем, юрăсем пĕлетĕн-и-ха? Вăл çавăн пек ачасене çеç юратать.

— Пĕлетĕп, атте. Шартлама сивĕ çинчен те, юр пĕрчисем çинчен те, — хавасланчĕ ача.

— Апла пулсан чĕнсе пăхăпăр.

Тепĕр кун Валерка ашшĕ хитре чăрăша пӳрте илсе кĕчĕ. Йăванса каясран ăна хĕреслесе çапнă икĕ хăма татăкне шăтарса тĕплĕн вырнаçтарса лартнă иккен.

— Ну, ывăлăм, кĕçĕр пирĕн пата хаклă хăна килет. Хĕл Мучи пыратăп тесе телеграмма янă. Кĕтсе илме хатĕрленĕр, — терĕ те кил хуçи ĕçе тухса кайрĕ.

— Анне, илтрĕн-и атте мĕн каларĕ? — хумханса чупса пычĕ тĕпеле савăннă ача. — Хăвăртрах елка капăрлатас пулать!

— Ан чăрмантарса çӳре-ха. Елка шухăшĕ-и халĕ манăн, — мăкăртатрĕ амăшĕ. — Каç пуличчен вăхăт пайтах-ха.

Валерка пит-куçне кăмăлсăррăн турткаласа илчĕ те ассăн сывласа ячĕ. Нимĕн те тăваймăн, кĕтес пулать. Вăл кĕтесре ларакан симĕс йывăç патне пычĕ. Унăн лапсăркка турачĕсем ăшă пӳртре нӳрелнĕ, çинçе йĕпсем çинче вĕтĕ-вĕтĕ çутă сывлăм пĕрчисем курăнаççĕ. Чăрăшран тутлă шăршă пӳрте сарăлнă. Вăл ешерекен чечеклĕ çарана, çурхи вăрмана аса илтерет.

Ытла та ерипен шăвать-çке вăхăт кĕтнĕ чух. Юлашкинчен амăшĕ тĕпелти ĕçне пĕтерчĕ пулас. Вăл чăрăша урай варрине куçарса лартрĕ, чăлантан пысăках мар ещĕк йăтса кĕчĕ. Унта елка çине çакмалли теттесем иккен.

— Кил, капăрлататпăр, — терĕ амăшĕ çакна пасăрах чăтаймасăр кĕтекен ывăлне.

Малтан вĕсем пралукпа пĕр рет çыхăнтарнă тĕрлĕ тĕслĕ пĕчĕк электрица лампăсене йывăç турачĕсем çине майлаштарса хучĕç, унтан йăлтăр-йăлтăр теттисене çака-çака ячĕç. Эх, хитре елка пулчĕ. Хĕл Мучи савăнатех кун пеккишĕн.

— Халĕ юлташусене кайса систер, — хушрĕ амăшĕ. — Кала, Хĕл Мучи килет, сире чĕнме хушрĕ те. Ачасемсĕр кичем ăна.

Валерка йăпăр-япăр тумланчĕ те урама чупса тухрĕ. Чи малтан Алеша патне кĕчĕ. Вĕсен те урай варринче капăрлатнă пысăк елка ларать.

— Пăх-ха, мĕнле хитре, — мухтанма тăчĕ Алеша. — Эпир аппапа иксĕмĕр капăрлатрăмăр.

Валерка ăна тăнламарĕ. Алăк патĕнчен иртмесĕр вăл юлташне хăй патне чĕнсе илчĕ.

— Кĕçĕр пирĕн пата Хĕл Мучи килет, — пăшăлтатса пĕлтерчĕ вăл.

— Мĕ-ĕн? — ыйтрĕ Алеша куçне тусĕ çине тĕллесе. Тĕлĕннипе вăл пĕр самант сăмах чĕнеймесĕр тăчĕ.

— Атте чĕннĕ ăна, — хушса хучĕ Валерка.

— Чăн-чăн Хĕл Мучиех-и?

— Аха, чăн-чăнниех. Кĕçĕр пыратăп тесе телеграмма янă вăл пирĕн пата. Атте каларĕ. Анне те. Хĕл Мучи шутсăр ачасене юрататъ. Яланах тутлă кучченеç илсе килет вĕсем валли. Эсĕ те пыр каç пулсан пирĕн пата. Вара сана та кучченеç паратъ. Анне çывăх тантăшусене пурне те чĕн терĕ. Атя Петюка кайса пĕлтеретпĕр.

Çак хыпара илтсен Петюк калама çук хĕпĕртерĕ, мĕншĕн тесен вĕсен килĕнче елка та çук иккен. Кӳршĕре пурăнакан Ольăна та кĕрсе систерчĕç. Вăл хĕр ача ĕнтĕ, çапах тантăш, вĕсем час-часах пĕрле выляççĕ.

Хĕллехи кĕске кун часах вĕçленчĕ. Чӳречесем çуталсан урамра вылякан Валерка килне васкаса кĕчĕ.

— Килмерĕ-и Хĕл Мучи? — ыйтрĕ вăл унăн-кунăн пăхкаласа.

— Кĕçех çитет пулĕ ĕнтĕ, — терĕ ашшĕ. — Унччен атьăрха каçхи апат çиер.

Хумханнă ача каллĕ-маллĕ уткаларĕ, темиçе чĕнсен те сĕтел хушшине ларасшăн пулмарĕ. Амăшĕ итлемен ачасене Хĕл Мучи юратмасть, ун пеккисем патне хăнана каймасть тесен тин алла кашăк тытрĕ.

Пĕчĕк хăнасем пуçтарăнсан Валерка ашшĕ манăн наччаслăха каймалли пур-ха тесе тумланчĕ те пӳртрен тухрĕ. Уяв тумне тăхăннă ачасем малалла иртсе çурма тĕттĕм пӳлĕмре илемлĕн ялкăшса ларакан елка патне пырса тăчĕç. Анчах яланхи пек выляма-чупма никамăн та кăмăл пулмарĕ. Вĕсем халĕ урамри кашни сасă-чĕвве тимлĕн итлерĕç, хаклă хăна килессе шăппăн, чăтăмлăн кĕтрĕç.

— Анне, ну хăçан килет вăл? — тӳсеймесĕр ыйтрĕ Валерка юлашкинчен.

Çав самантрах алăка тахăшĕ хыттăн шаккарĕ.

— Кĕрех. Кам унта? — терĕ кил хуçи арăмĕ тĕпелтен тухса.

Алăк яриех уçăлчĕ те, маччана çитиех çĕкленнĕ сивĕ пăспа пĕрле пӳрте вăрăм сухаллă, шурă вăрăм тумлă çӳллĕ старик кукăр туйиине шаклаттарса кĕрсе тăчĕ.

— Сывă-и, кил хуçисем! Сывă-и, ачасем! Эпĕ Хĕл Мучи! — терĕ вăл хулăн, шутсăр хулăн сасăпа.

— Сывах-ха, Хĕл Мучи! — пуçне тайрĕ Валерка амăшĕ. — Ирт малалла. Мĕнле çитрĕн?

— Çулĕ йывăр пулчĕ. Çил-тăвăла пула самолетпа тухаймарăм. Малтан çунана шурă упасене кӳлме тиврĕ. Унтан пăлансем пулăшрĕç. Кунта вара мулкач кĕтĕвĕ вĕçтерсе çитерчĕ.

Елка çывăхĕнче тăракан ачасем килнĕ хăна çинчен куçĕсене илмесĕр унăн кашни сăмахне тăнларĕç, кашни хусканăвне асăрхарĕç. Валеркăна вăл пачах килĕшмерĕ. Пĕрре те ӳкерчĕксем çинчи е телевизорпа курнă Хĕл Мучи пек мар. Самăрскер, тумĕ те илемлĕ мар, лăпăш-лапăш, катан пиртен çеç çĕленĕскер. Уринче хура кăçат, пуçĕнче хура çĕлĕк. Тата кучченеç хутаçĕ те çук. Пушă алăпах килнĕ...

— Ирт малалла, хисеплĕ Хĕл Мучи, — терĕ Валерка амăшĕ хаваслăн кулкаласа. — Ачасем авă чăтаймасăр кĕтеççĕ сана.

— Питĕ хавас. Тавтапуç ачасене манпа тĕл пулма пуçтараннăшăн, — çапла каласа Çĕнĕ çул хăни елка енне утăм турĕ çеç, сехри хăпнă ачасем йывăç тепĕр енне ыткăнчĕç, Хĕл Мучи хыçранах утнине курсан Валерка амăшĕ патне чупса ун хыçне кĕпĕрленсе тăчĕç.

— Ма хăратăр эсир унран? Сире юратать вăл. Çавăнпа хăнана килнĕ, — лăплантарма тăрăшрĕ ачасене хĕрарăм. — Атьăрха елка карти тăвар, юрлар, ташлар. Тытăнăр алла-аллăн.

Кĕвĕ янраса кайрĕ. Ачасем хăюсăррăн хускалчĕç, анчах нихăшĕ те Хĕл Мучипе юнашар тăрасшăн пулмарĕ.

Темиçе юрă юрланă хыççăн хаваслă çăмăл кĕвĕ янрама тытăнчĕ.

— Атьăр Хĕл Мучие ташлама ыйтатпăр! Алă çупăр, ачасем!

— Мĕнех вара, — кăмăллăн килĕшрĕ çурçĕр хăни. — Эпĕ ташлама юрататăп!

Тăпăрт-тăпăрт-тăпăртик, — куçкалать кĕвĕ май пысăк кăçатлă Хĕл Мучи. — Ух! Ах! Тап-тап-тап!..

Кĕтмен çĕртен кĕвĕ шăп чарăнчĕ.

— Мĕн пулчĕ? Валерка, эсĕ чартăн-и?

— А мĕн вăл сикет те сикет. Мăнтăрскер, капла урай хăмине хуçать вĕт, — терĕ пĕчĕк хуçа çиллессĕн. — Çитет. Тек ташлаттармастпăр ăна.

— Чăнах та, çитет мана, — килĕшрĕ Хĕл Мучи. — Халĕ эпĕ пĕчĕк туссене итлес тетĕп. Сăвăсем, юрăсем нумай пĕлетĕр пулĕ-ха эсир. Ну, хăшĕ чи малтан тухас тет?

Чылаях хăюланнă ачасем кашни хăй пултарулăхне кăтартма тытăнчĕç. Сăвăсем те каларĕç вĕсем, юрăсем те юрларĕç, ташласа та пачĕç. Хĕл Мучие çакă шутсăр килĕшрĕ.

— Ну, маттурсем! — мухтарĕ вăл. — Савăнтартăр. Тавах кăмăл тунăшăн. Тутлă кучченеçпе хăналас, хитре парнесем парас килет сире пурне те çак уявшăн. Анчах ман çумра, хăвăрах куратăр, нимĕн те çук. Çапах кулянмăпăр. Эпĕ ахаль Хĕл Мучи мар-çке, эпĕ — асамçă. Пăшăлтататăп кăна — мĕн кирли пурте самантрах пулать. Эсир ан чăрмантарăр çеç мана асам тума. Шăп тăрăр, вырăнтан ан хускалăр. Ну, хатĕр-и? Тытăнатăп...

— Çутă, çутă, пăч пул, — мăкăртатрĕ Хĕл Мучи çурма сасăпа. Çав самантрах мачча çинчи лампа та, елка та сӳнчĕç. — Кучченеç хутаçĕ тăч тул.

Тĕттĕм кĕтесре чăнахах хуллен тем кăштăртатни илтĕнчĕ.

— Ху тĕллĕнех, çынпа мар, ура патне килсе лар.

Шăпăрт тăракан ачасене пăч тĕттĕм пӳртре такам утса иртнĕн, сывлăш хуллен чӳхенсе илнĕн туйăнчĕ.

— Пулчĕ! — илтĕнчĕ çавăнтах Хĕл Мучин янравлă, хулăн сасси. Ялт çуталчĕ пӳрт ăшĕ. Йăлтăр йăлкăшрĕç чăрăш çинчи пĕчĕк лампăсем. Пăхрĕç те ачасем тĕлĕнсех кайрĕç: Хĕл Мучи çывăхĕнче, елка айĕнче, хĕрлĕ лентăпа илемлетсе çыхнă хутаç ларать.

— Кучченe-еç! — пĕчĕк аллисене хаваслăн çупса, сиккелесе илчĕ Оля. Ыттисем тĕлĕннипе сăмах чĕнеймерĕç.

Тем те пур иккен çак асамлă хутаçра: тĕрлĕ тутлă канфет, печени, премĕк. Теттесене те манман ырă Хĕл Мучи. Ольăна пукане пачĕ, арçын ачасене машина, самолет, ракета...

Тутлă кучченеçĕсене чăмла-чăмла теттесемпе выляма пикеннĕ ачасем Хĕл Мучи шăппăн тухса кайнине те асăрхамарĕç. Кĕçех Алеша амăшĕ пырса кĕчĕ, пĕчĕк хăнасене килĕсене илсе кайрĕ. Унтан Валерка ашшĕ те таврăнчĕ.

— Атте! — чупса пычĕ ун патне пĕчĕк ывăлĕ. — Эх, кураймарăн. Пирĕн пата Хĕл Мучи килчĕ. Пы-ысăкскер! Сан пекех. Çук, санран та çӳллĕрех, кăшт çеç маччана перĕнмест. Атте, пăх мĕн чухлĕ кучченеç пачĕ вăл мана. Алешăна та, Петюка та, Ольăна та.

Ашшĕне çăвар уçма памасăр Валерка ăна мĕн пулни-иртнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартрĕ.

— Эсĕ вара елка тавра юрласа çавăраннă чух мĕншĕн Хĕл Мучие аллуна пама килĕшмерĕн? — ыйтрĕ юлашкинчен ашшĕ.

— Тăм илесрен хăрарăм. Пӳрнисем пăр-çке унăн. Хăй те вăл пăр. Çапла вĕт, анне?

Унтан ача шăпланчĕ, кĕске самант тем шухăшласа ларчĕ.

— Атте, — терĕ вăл каллех, — санăнни пек çĕлĕк ăçтан тупнă вăл?

— Мĕнех вара. Ун евĕр çĕлĕк пур çĕрте те сутнă-çке. Эппин, Хĕл Мучи те туяннă ăна.

Ача каллех шăпланчĕ, тем аса илнĕн каллех пĕр вăхăт чĕнмерĕ.

— Атте, унăн туйи каснă лартнă пирĕнни пек.

— Мĕнле туя? — ăнланаймарĕ ашшĕ.

— Астăватăн-и, çулла анне урине ыраттарсан эсĕ ун валли туя илсе килтĕн...

— А-а... Çапла. Аптекăра илнĕччĕ эпĕ ăна. Мĕн тĕлĕнмелли тупрăн-ха унта? Сахал-и пирĕнни пек туя тĕнчере?

— Çук, атте, пирĕн вăл, пирĕн, — хĕрсех ăнлантарчĕ ывăлĕ. — Мĕншĕн тесен ун çинче пĕчĕк шăйрăк пур. Ăна эпĕ... Аха, эпĕ... Урана пĕçертнĕшĕн пахчари вĕлтрене хĕненĕ чух

вăл шĕвĕр чул çине пырса перĕнчĕ. Куртăм, шутсăр тинкерсе пăхрăм эпĕ Хĕл Мучи туйии çине.

— Тĕлĕнмелле, — хулпуççисене хускатса илчĕ ашшĕ.

Халĕ ĕнтĕ ăна шухăша кайма черет çитрĕ.

— Туйине эпĕ, пăрлак пулсан кирлĕ-ха тесе крыльца патне тăратнăччĕ, — терĕ вăл юлашкинчен. — Э-э, пĕлетĕп, пĕлетĕп. Хĕл Мучин çулĕ вăрăм, йывăр пулнă терĕн-çке эсĕ. Ывăннă вăл. Çавăнпа ватăскер туя курнă та пирĕн пӳрте ун çине тĕренсе кĕнĕ.

— Мĕншĕн пĕрле илсе кайрĕ эппин ăна?

— Кам каларĕ сана илсе кайрĕ тесе? Çавăнтах, эпĕ лартнă тĕлтех тăрать вăл. Ыран ирпе хăвах куратăн акă.

Çапла ăнлантарни Валеркăна çырлахтарчĕ-ха. Çапах пĕр япалана ăнланаймарĕ вăл. Хĕл Мучи пирки ыйтнă чух мĕншĕн унăн ашшĕпе амăшĕ пĕр-пĕрин çине ытарлăн пăха-пăха илчĕç? Мĕншĕн вĕсен пичĕ-куçĕнче час-часах темле вăрттăн, хаваслă кулă ялкăша-ялкăша çуталчĕ?






*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего школьного возраста

**Зоя Алексеевна Нестерова**

**ТĂВАТĂ АСАМÇĂ**

**ЧЕТЫРЕ ВОЛШЕБНИКА**

Рассказы и сказки

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Васильева*
Художник *И.В. Алексеев*
Художественный редактор *О.П. Сергеева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.В. Вечеркина*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93-953003.
Изд лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 26.02.06.
Формат 70x90 $^{1}/_{16}$. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная.
Печать офсетная. Усл. печ.л. 3,51. Учетно-изд. л. 2,45. Тираж 2000 экз. Заказ № К-6060. Изд № 17.

ГУП «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. И.Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И.Яковлева, 13.